Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 ДЕКАБĔР 23 КĔСНЕРНИКУН 294 (4806)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

19-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского; 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Партине çĕнĕ членсем илесси

Социализмăшăн кĕрешнĕ çĕрте, сталинла пятилеткăсен çулĕсенче парти партире тăман большевиксен, хăйуллă çĕре тĕрĕсленнĕ тата Ленин—Сталин парти ĕçне вĕçĕмсĕр йуратакан большевиксен нумай йуратакан çиййе пăхса ÿстерчĕ. Массăсемпе тачă çыхăнса тăракан большевикла парти хăйĕн тавра партире тăман большевиксен калама çук пысăк çарне çитĕнтерчĕ, партире тăман большевиксем парти дисциплинине, унăн принципĕсене тата социализмăла пурнăçа кĕртнĕ çĕрти тимлĕхе кашни кун ытларах та ытларах партирен вĕренсе хăнăхса пыраççĕ.

Аслă Совет суйлавĕсем совет çĕршывĕнчи халăх массисен вăйлă патриотизмне, партире тăманнисĕр Ленин—Сталин партине вĕçĕмсĕр йуратнине, парти—партире тăман массăсемпе çирĕп пĕрлешÿре пулнине татах тепĕр хут витĕмлĕ те усçăн кăтартса пачĕç. Коммунистсемпе партире тăманнисен суйлав блокĕ вăл—большевиксем массăсемпе тытакан тачă, никам пăсайми çыхăну итогĕсенчен пĕриĕ. Суйлав кампани вăхăтĕнче партире тăман активиссен çĕнĕ, калама çук пысăк çиĕ çĕкленчĕ, вĕсем коммунистсемпе пĕрле большевикла партишĕн тата парти хапăл тăвакан кандидатсемшĕн хĕрÿллĕн агитацилерĕç. Мускав районĕсенчи вунă пине йахăн партире тăман агитаторсем халăх хушшинче пысăк, ытла та усăлă ĕç туса ирттерчĕç. Вĕсен кашниннех—пĕр ĕмĕт, пĕр шухăш: хăйĕн калама çук пысăк тăвămлă ĕçĕнче, социализмăшăн кĕрешнĕ çĕрте партине малашне те пулăшса пырасси.

Суйлав кампанинче палăрнă партире тăман активиссенчен нумайăшĕсем партине кĕме заявленисем параççĕ. Партире тăман актив çăрĕнчен пĕри—Ворошилов йачĕпе хисепленекен чукунçул çинче 32 çул хушши ĕçленĕ Игнатов йулташ хăйĕн заявленийĕнче акă мĕн çырать:

„Епĕ ĕнтĕ ватăлма пуçланă çын, анчах хама хам çамрăк туйатăп. Епĕ мана пирĕн Ленинăн—Сталинăн аслă партирен ретне илме ыйтатăп. Пурнăçра манăн, партипе пĕр урапан активлăн пынисĕр пуçне, урăх çул çук. Епĕ хамăн мĕн пур опыта тата пĕлÿсене, кирлĕ пулсан—пурнăçа та партипе халăха паратăп“.

Партире тăманнисен калама çук пысăк активĕ, парти ретĕсене тултарса пымали резерв пулса тăракан актив халăх вăхăтра парти тавра тимĕр стена пек тăрать. ССР Союзĕн Аслă Советне суйланă май ĕççыннисен политикăла çĕкленÿвĕпе общественăй активлăхĕ халиччен пулманла вăйланни, суйлав кампанинче çĕнĕрен палăрнă партире тăман пиншер агитаторсем,—çаксем пурте парти организацисене пирĕн çĕршыври малта пыракан, социализмăшăн ĕçешĕн чун-чĕререн тăрăшакан чи лайăх çынсене парти ретне уйрăмăн суйласа илес ĕçре тата ытларах майсем туса параççĕ.

Тĕп Комитет парти ретне çĕнĕрен илме йышăнăрăнпа çултăлăк çитрĕ. Тĕп Комитет хăйĕн постановленийĕнче партине çирĕп йĕркепе уйрăмăн суйласа илмеле тесе каларĕ. Парти ретĕсене тултарса пымали çак ленинла-сталинла принцип—парти ÿсĕмĕне никам пăсайми саккун.

Пĕчченшерĕн тĕрĕслесе илни партие хăйĕн ретĕсене малта пыракан пиншер рабочисен, колхозниксен, совет интеллигенцийĕн лайăх çыннисен шучĕпе ÿстерме пулăшрĕ. Мускаври, Ленинградри уйрăм предприятисенчи пулăмсем парторганизацисем хăйсен ретĕсене пĕтĕм çĕршыва палла çынсен, чи лайăх стахановецсен шучĕпе ÿстереççĕ. Малтанлăха хисепе илнĕ тăрăх, партие çĕнĕрен илме пуçланăранпа парти кандидатне 46.289 çын, парти членне 51.675 çын иянĕ. Çак хисепрен райкомсемпе хула комитечĕсем кандидата 27.785 çын, парти членне 33.720 çын çирĕплетнĕ.

Партие илнĕ чухне çыхăлхлă пулассипе, кашни çынна уйрăмăн тĕрĕслесе илесси, парти ретĕсене тăшмансемпе, йут етемсенчен, çĕрĕк çынсенчен хÿтĕлесси—çакăн пек задачăсем тăраççĕ парти организацисем умне. Анчах çак принцип тăрăх ĕçлес вырăнне, чылай çĕрте парти ретĕсене çĕнĕ вăй илессипе ĕçсĕр пăраççĕ. Чăннипе илсен, чылай организацисенче кутарапчас партие илесси хупă тăрать. Çакăн пек пулсан ĕçлеме каплăрех пулмалла!

Политикă йенчен тÿрĕ, производствăра лайăх, общественăй пурнăçра хастарлă çынсене партие илессине, парти кандидатĕнчен члена куçарассине нимĕн сăлтавсăр чарса тăракан руководительсем пур. Калинин хулинчи вагонсем йусакан заводра Ларйушкин слесăр ĕçлет. Вăл колхозник ывăлĕ, завода 1931 çулта тÿрех хĕрлĕ çартан пынă. Политикă йенчен ÿснĕ, çирĕпленнĕ. Лайăх производственник. Цехри коммунистсем тата партком секретарĕ Григорьев йулташ ун çинчен пите лайăх çын вырăнне хурса калаççĕ. Апла пулсан та ăна партине кĕме никам та рекомендаци парасшăн мар.

Парти организацисем йенчен партине кĕме тăрăшакан активиссене нимĕн сăлтавсăр шанса тăмании çинчен калакан фактсем те сахалах мар.

Дон-çи Ростоври Чукунсул райкомĕпе Сталинский райком вунă уйăх хушшинче те партине пĕр çын илмен. А вĕт çак районсенче партине кĕрешшĕн хыпса çунакан, партире тăма тивĕç рабочисем сахал мар.

Правилă тенĕ пекех, районсенчи пуçламĕш парторганизацисем малта тăракан çынсене партие илес тĕлĕшпе активлă ĕçлемеççĕ, вĕсен пĕтĕм ĕçĕ те заявленисене. пăхса тухасси çĕна пулать. Анчах çакăн пек заявленисене автоматла пăхса тухасси те уйăхшара тăсăлать. Волокитă, бюрократизмă—акă мĕнпе тĕл пулаççĕ хăшпĕр организацисенче коммунис пулма тăрăшакан тÿрĕ çынсем. Горький облăçĕнчи Дзержинский районĕнче Морозов сочувствующи панă заявлени партии организацинче 1937 çулти йанварĕн 15-мĕшĕнчен вара пăхмасăр выртнă.

Рекомендаци—пысăк ыйту. Сыхăлăхлă пуласси вăл саккунлă йаплапа. Пĕлмен, тĕрĕслесе пăхман çынна рекомендаци пама йурамасть. Анчах та кайран-малтан мĕн те пулин сиксе ан тухтăр тесе тÿрĕ, партире пулма тивĕçлĕ çынсене рекомендаци пама хăраса тăни вăл—большевизмăран инçетре тăракан йапала.

Партине ÿсме кирлĕ пысăк резерв вăл—сочувствующисем, комсомол. Задачсенчен пĕри—çак резервран çĕнĕрен парти членĕсем пăхса çитĕнтересси пулать. Партичĕрĕ организмĕ. Вăл ăнсăртран кĕнĕ, йутă, тăшманла етемсенчен тасалать. Çав вăхăтрах вăл хăйĕн хушшине лайăх, малта пыракан, чăн малтан рабочи класран çĕнĕ çынсем илсе хутшăнать. Комсомол хушшинче руководительсем пулмалла, пултаракан активиссем ÿсе çитĕнчĕç. Анчах вĕсене темшĕн партине кĕме чараççĕ. Çапла вăра, парти ÿсĕмне чăрмантараççĕ, çĕнĕ кадрсем ÿстерессине чăрмантараççĕ. Чылай партипе комсомол организацисем парти Тĕпкомĕ комсомолецсене партине илесси çинчен йышăннă решение сукна айне хунă.

Партие илесси халĕ парти ĕçĕнчи чи ответлă участокă. Уйрăмах çивĕч сыхăлăх кирлĕ, большевиксен ретне тăшман, шпион, диверсант кĕрсе кайма ан пултартăр. Паллă, йутçĕршыв разведкисен агенчĕсем темĕн тĕрлĕ майсемпе парти ретне хĕсенсе кĕме пăхаççĕ, çапла вара маскă тăхăнса пирĕн çĕршывра сăтăрла ĕçсем тума пăхаççĕ. Партине кĕрекене кашниех тĕплĕн тĕрĕслесен кирлĕ. Унăн политикăла сăн-питне, производствăра авангардра выран йышăннине, вăл камсемпе çыхăнса тăнине, унăн, сывăн моральне сăн-питне тĕрĕслемелле.

Çĕнĕрен кĕрекене кашниех тĕплĕн тĕрĕслемелле. Партине илес çĕрте автоматизмă пулмала мар. Парти организацийĕн задачи—партире тăман массăсем патне, пирĕн çĕршывра историлĕ суйлав кампани вăхăтĕнче çĕкленнĕ агитаторсен çĕнĕ отрайĕ патне çывăхрах пырасси, партине кĕме турткакан çынсене тимлĕрех пăхасси, вĕсене пĕлсе воспитани парасси, çапла вара—социализмăшăн кĕрешес çĕрте хăйсене кăтартнă çынсене суйласа парти ретне илесси пулать.

„Манма йурамасть, партире тăракансем пĕлĕт çинчен ÿкмеççĕ. Асра тытмала, партире тăракансем пурте хăйсем те хăйсен вăхăтĕнче партире тăман. Пайан вăл партире тăмасть, а ыран партире тăрĕ“ (Сталин).

Социализмăшăн кĕрешекен активлă борецсен çĕнĕ пысăк резервн парти тавра ÿсрĕ. Çак резервсем валли кунах социализм çĕнтерÿвĕсемпе пĕрле ÿсеççĕ, пирĕн çĕршыври политикăла тата производствăла çĕкленÿпе пĕрле ÿсеççĕ. Пĕчченшерĕн суйласа илес принципа хытă пăхăнса, çынсене тĕплĕн тĕрĕслесе, большевиксен ретне чи чаплă, Ленин—Сталин партине вĕçĕмсĕр йуратакан çынсене илмелле. („Правда“ умстатйинчен).

1938 çулхи çуракине хатĕрленесси çинчен

ПСК(б) Парти Обкомĕпе Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулти декабĕрĕн 20-мĕшĕнче йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

1937 çулта Чăваш республикинчи колхозсем вăйлă тырпул туса илчĕç, чылайăшĕ 90—100-шер пăт тĕштырă илчĕç, 300 колхоз ытла гектартан 100 пăтран та ытла тĕштырă пухса кĕртрĕç. Пирĕн республикăна партипе правительстăвă тракторсемпе машинăсем парса пысăк пулăшу пачĕç, государствă лайăх пахалăхлă суртлă вăрлăх пачĕ, çĕре çемçетмели минералла çăпăхсене те нумай панă, колхозсене государствăн агрономĕсем парса тата агротехника йенчен йĕртсе пынипе те пысăк пулăшу пачĕ,—çаксем пурте пирĕн колхозсене пысăк тухăçлă тырпул туса илме май пачĕç. Партипе совет органĕсем колхозсенчи йĕртсе пыракан кадрсене тата колхозниксен массине агротехникăла ĕç майĕсем çинчен вĕрентсе—социализмла ăмăрту тата стахановла ĕçлес йухăма организацилеме пулăшрĕç. Колхозниксемпе колхозницăсен Сталин йулташ „7—8 мĕлйард пăт тырă илмеле“ тума чĕнсе каланине ăшшăн йышăнса вăйлă тырпулшăн тÿрĕ, йуратса тата тăрăшса ĕçлени те çавăн пек вăйлă тырпул туса илме нумай пулăшрĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем Сталин йулташ лозунгне пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешÿ пĕлнине, хăйсен ăнланулăхĕне ĕçре кăтартса пама тăрăшрĕç.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешекен вуншар тата çĕршер стахановла звенсем вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартса рекордлă тырпул туса илчĕç. Патăрйел районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхозри П. П. Петухов йулташ бригадинчи звено 3,64 гектар çинчен „Московский А—315“ суртлă çĕлĕ гектар пуçне вăтамран 426 пăт илнĕ. Вăрнар районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз,—унта председательте пулса орденоносец, ССР Союзĕн Аслă Совет депутачĕ С. К. Коротков йулташ ĕçленĕ,—гектар пуçне вăтамран 180-шар пăт тырă туса илнĕ. Çав колхозрах Талайев йулташ бригади 54 гектар çинчен „Диппе“ суртлă çĕлĕ гектар пуçне вăтамран 344 пăт, Х. Храмов йулташ бригади 18 гектар çĕр çинчен çурхи тулă гектар пуçне вăтамран 305-шер пăт илнĕ. Канаш районĕнчи Киров йачĕпе тăракан колхозри Степанова комсомолка бригади 20 гектар çĕр çинчен кĕрхи тулă гектар пуçне вăтамран 287-шер пăт илнĕ.

Колхозра тÿрĕ ĕçлени, вăйлă тырпулшăн большевикла кĕрешни тата стахановла ĕçлени—колхозниксен материаллă пурнăç условине пит çÿле çĕклентерчĕ. Ĕçкунĕ пуçне кăçал çуршар пăт, вăтăршар кĕренке тата тĕрĕр пăт та тырă валеçнĕ колхозсем çĕршерĕн шутланаççĕ. Ĕçĕн çавăн пек лайăх итогĕ, паллах, колхозниксемпе колхозницăсене савăнтарать, колхозсен çавăн пек çитĕнÿвĕсемпе рабочи клас та савăнать. Анчах та епĕр халиччен тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларма пултараймастпăр, 7—8 мĕлйард пăт тырă илмели çинчен Сталин йулташ панă лозунга пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме пирĕн тырпул тухăçне ÿстерес ĕçре татах та çĕнĕ çитĕнÿсем тумала.

Анчах та, 1938 çулхи çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пулса пынине пăхса тухнă хыççăн, Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Обкомĕн çакна палăртмала пулчĕ: хăшпĕр колхозсемпе машинă-трактор станцисен тата райĕçрĕç пайĕсен руководителĕсен пуçĕсем 1937 çулти çитĕнÿсемпе çавăрăнса кайнă, вĕсем çав çитĕнÿсемпе лăпланса аллисене усса йарса 1938 çулхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ним тумасăр лараççĕ.

Ĕç çавăн пек тăнине Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Обкомĕ 1938 çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешессишĕн вăл сиенлĕ те хăрушă тесе шутлаççĕ.

ПСК(б) Парти райкомĕсем, райĕçтăвкомсем, çĕрĕç органĕсем, колхоз правленийĕсем колхозниксен ССР Союзĕн Аслă Советне суйланă чухнехи политикăла çĕкленÿпе усă курса колхозниксене 1938 çулхи çуракине хатĕрленес ĕçе мобилизацилеме пĕлмен.

Çуракине хатĕрленес ĕç пĕтĕмпех çителĕксĕр пулса пырать. 1938 çулта татах та вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешÿ колхозниксен анлă массине мобилизацилес тĕлĕшпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Обкомĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, парти райкомĕсене тата райĕçтăвкомсене 1938 çулхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе кайа йулнине пĕтермелли ĕçсене туса ирттермĕ хушас. Пур колхозсемпе совхозсенче, бригадăсенче, тракторисен тата йалхуçалăх специалисчĕсен хушшинче Мускав хулипе облăçĕнчи фабрикăсемпе заводсенчи стахановецсем чĕнсе, калаччĕ çÿтсе-йавса сталинла тырпулшăн походла хутшăнмала. 1938 çулхи йанвар уйăхĕнче çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхĕ туса ирттерес.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Обкомĕ колхозниксемпе колхозницăсене йурне те, республикăри пур çĕрĕç работникĕсене сталинла уйăхлăхра социализмăла организацилĕхпе большевикла йĕркелĕх тĕслĕхĕ кăтартса, пĕр пек тикĕс, ним чăрмансăр тата штурмовщинăсăр ĕçлеме чĕнет.

2. Вăйлă тырпул туса илме май паракан агротехникăла ĕçсене 1938 çулта çакăн чухлĕ туса ирттермелле:

Йаровизаци	100.000 га
Мулчировани (уйа сарни)	40.000
Нитрагинизацие азотогинизаци*)	21.500
Кĕрхи тыра калчисемпе клевере çуркунне сÿресси	150.000
Калчасене апат парасси	50.000
Тислĕк каларасси	10 млн. лав
Кĕл хатĕрлесси	125.000 цент.
Минераллă çăпăхсем кÿрсе килесси	33.000 тонна
Йур тытмала	200.000 га
Çуртрисене ретлĕ акмала	210.000

Акмали вăрлăха 100 процентĕпех вутпуççирен тасатмала.

3. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, районсенчи çĕрĕç пайĕсене, МТС-сене тата колхоз правленийĕсене йанвар уйăхĕнчен кайа йулмасăр колхозсемпе, бригадăсемпе тата вăйлă тырпул звенисем тăрăх кашниннех агротехникăла ĕçсен планĕсене туса çитерме хушас. Çав плансем çинчен пур çĕрте те колхозниксен пухăвĕсенче сÿтсе-йавса тата кашни колхоз 1938 çулти вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре мĕнле показательсем тăрăх ăмăртса ĕçлессине йышăнмала.

Райĕçтăвкомсем, районсенчи çĕрĕç пайĕсем тата МТС-сем çак ĕçре колхоз правленийĕсене, бригадăсемпе звенисене йалан практикăлă пулăшу парса пымала.

4. Парти райкомĕсене декабрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа йанварĕн 1-мĕшне çитичченхи срукра районри парти пухăвĕсенче 1937 йалхуçалăх çулĕн итогĕсем çинчен сÿтсе-йавса районри пĕтĕмпе, МТС тата уйрăм кашни колхоз мĕнле ĕçленине хак парса тухса, 1938 çулта вăйлă тухăç туса илме май паракан ĕçсене конкретлăн кăтартса „гектар çинчен 100 пăтран кайа илекен пĕр колхоз та пулмала мар“ лозунг тавра кĕрешÿ пуçарса йамала. Çав ыйтупа докладчик парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулмала.

5. 1938 çулхи февраль уйăхĕнче кашни районрах колхозниксен районри слетне ирттермеле. ПСК(б)П райкомĕсемпе райĕçтăвкомсен çав слетра хатĕрленнĕ май колхозсене çуракине лайăх та хăвăрт хатĕрле шутпа политикăла тата массăла ĕçе анлăн сарса йамала.

6. Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ колхоз правленийĕсемпе районри организацисене агротехника массăла вĕренес ĕç çине çавăрăнса пăхма хушаççĕ. Вĕренÿвĕн тĕп формисем пулса тăракан агротехкружоксене, зоокружоксене тата заочнă йĕркепе вĕрентесси пуçне, Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ Горький облăçĕнчи опыт тăрăх вĕренÿн çакăн пек формипе усă курма сĕнеççĕ:

Колхоз председателĕсем, бригадирсем тата кĕршĕри колхоз членĕсем вăйлă тырпул туса илнĕ, районра малта пыракан колхоза 2—3 кунлăха пухăнаççĕ те, кунта вара çав вăйлă тухăç колхоз йепле майпа вăйлă тырпул туса илни çинчен, çав колхозăн практикипе опычĕ çинчен агроном пулăшнипе конкретла, практикăра вĕренеççĕ. Райкомсемпе райĕçтăвкомсен çавăн пек майпа вĕренме мĕнле колхозсем опорла пункт пулассине палăртмала, çавăн пек пункт пулма тивĕç илнĕ колхозсене хăйсемшĕн пысăк тивĕç тесе шутламала пултăр. Çак курссенче—канашлусенче лекторсемпе докладчиксем çав колхозăн председателĕ тата бригадирсем пулмала; районри агрономсен вĕсене занати ирттерме хатĕрленме пулăшмала, колхоз руководителĕпе, стахановецсемпе пĕрле çав курсра вĕренмели ыйтусене палăртса хумала.

7. Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Обкомĕ пур парти, совет, çĕрĕç органĕсене тата совхозсемпе колхозсене умĕнче халь тăракан пысăк задач вăл—кирек мĕнле условири пулсан та сталинла вăйлă тырпул туса илме пултармала çуракине хатĕрленесси пулать тесе шутлаççĕ. Парти райкомĕсем, райĕçтăвкомсем, МТС-сен тата çĕрĕç пайĕсем, кулленех çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлесе пынă, пана агротехникăла ĕçсен планĕсене пурнăçа кĕртсе пынă вăхăтрах, вăрлăх хывассипе вăрлăхсене хатĕрлес ĕç çине, суртлă вăрлăх акмали плана пурнăçа кĕртесси çине, тракторсемпе кăкармали инвентарсене тата пур тĕрлĕ йалхуçалăх машинисене вăхăтра та лайăх пахалăхпа йусасси çине, МТС-семпе колхозсен валли кадр (тракторисем, комбайнерсем, бригадирсем т. ыт. те) хатĕрлесси çине уйрăмăнах çавăрăнса пăхмала.

8. Йединоличниксем хушшинче çуракине хатĕрленес ĕçе хакламаннине тата вĕсене колхоза кĕртес тĕлĕшпе ĕçлессине палăртса, Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ парти райкомĕсене, райĕçтăвкомсене тата çĕрĕç органĕсене йединоличниксене çуракине хатĕрлентерес ĕç çине уйрăмăнах тимлĕн пăхма тата вĕсене колхоза кĕме пур майсемпе те пулăшса пыма хушаççĕ.

9. „Красная Чувашия“ тата „Чăваш Коммунĕ“ хаçат редакцийĕсене çавăн пекех тата районсенчи хаçат редакторĕсене çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пулса пыни çинчен, стахановецсен, малта пыракан колхозсен, МТС-сен тата районсен опычĕсене, сутатса пыма хушас.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Л. СПАСОВ

ПСК(б)П Обком секретарĕ Г. ИВАНОВ.

*) Нитрагин тесе пăрçалă культурăсене ÿсме пулăшакан азотлă бактерийсем ĕретнĕ порошока калаççĕ. Азотоген—пур тĕрлĕ культурăсене те ÿсме пулăшакан азотлă йапала.



ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „И. В. Сталин тата О. Й. Шмидт Мускавра челюскинецсене кĕтсе илнĕ кун. Июнĕн 1934 çул“. (Изогиз каларанăкан „И. В. Сталин“ албомран).

(СоюзФото).

Çулпуç сăмахне мĕлйун-мĕлйун çынсем итлерĕç

Сталин йулташăн тонфилм çине çырнă сăмахне трансляципе пани

Пĕтĕм Союзри Радиокомитетăн звукозапис фабрикĕ И. В. Сталин йулташ Мускав хулинчи Сталинский суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче, Пысăк театра, 1937 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнче калана сăмахне тонфилм çине çырнă.

Декабрĕн 21-мĕшĕнче кăçхине тонфилм çине çырнă тăрăх трансляципе пана. Тонфилм çине лайăх пахалăхпа çырнă пирки çулпуçăн сăмахне мĕлйун-мĕлйун ĕççыннисем итлеме пултарчĕç. ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли историлĕ кун умĕн, декабрĕн 11-мĕшĕнче, Пысăк театра пухăннисем пурте совет халăхĕ хăйĕн аслă çулпуçне вĕçĕмсĕр йуратнине демонстрациленĕ чухне пулнă пысăк çĕкленÿпе хавхалану тонфилм çинче хыççăн ĕççыннисем тепĕр хут туйса курчĕç.

Трансляци пĕтнĕ хыççăн ССР Союзĕн халăх артисчĕ П. М. Садовский Анри Барбюс çырнă „Сталин“ кĕнекерен пĕр сыпăкне вуларĕ. (ТАСС).

Йулашки сехетре

Республикă çарĕсем Теруеле туртса илнĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 21-мĕш (ТАСС). Рейтер агенстви Барселонăран пĕлтернĕ тăрăх, республикăнцăсем Теруел хулине туртса илнĕ. Пăлхавçăсем вилĕ хут контратака туса хăтланнă, анчах вĕсене пысăк çухатусем тутарса сирсе пăрахнă.

Мускав хулинчи парти, совет тата общăлă организацисен активĕн ВЧК—ОГПУ—НКВД çирĕм çул тултарнă йатпа пулнă пухувĕ

А. И. Микойан йулташ сăмахĕ

Пайан пирĕн çĕршыв совет ведомствисенчен пĕри çирĕм çул тултарнине кăна мар палăртат, тет Микойан йулташ, НКВД—вăл проста ведомства мар! Вăл пирĕн партине, пĕтĕм халăха пуринчен сывăхрах организаци.

Сталинла Нарком Николай Иванович Йежов йертсе пыракан наркомвнуделцăсем вут-хĕмĕн малти йĕркинче тăраççĕ. Пирĕн тăван çĕршывăн мĕн пур тăшманĕсемпе кĕрешес ĕçĕн малти позицине йышăнса тăраççĕ. ВЧК—ОГПУ—НКВД çирĕм çул тултарни—пирĕн партин, совет влаçĕн, пĕтĕм совет халăхĕн праçникĕ!

ВЧК—ОГПУ—НКВД утса тухнă çул социалисăмлă аслă революци çулне ӳкерчĕклесе парат,—тет тăвăллăн алă çупнă хушăра Микойан йулташ. — Революци историне пирĕн чекиссем мухтавлă ĕçсем çырса хунă.

Ленин—Сталин партийĕ уйăрса лартнă маттур большевик, революцин хăйулă рыцарĕ Феликс Едемундович Дзержинский йертсе пынă Пĕтĕм Российри Чрезвычайлă Комиççийĕ мĕнле туса йĕркеленине аса илет Микойан йулташ. Микойан йулташ çапла калат: Сталин йулташ, çавăн пекех Ленин та Дзержинский йулташа вĕçĕ-хĕррисĕр йуратнă. Йуратмали пулнă та! Мĕншĕн тесен вăл коммунисăм çĕнтерессишĕн шутсăр хĕрӳлĕн кĕрешекенни пулнă.

Капиталисăмлă тĕнче, импералисăмлă разведкăсем совет влаçĕ пурăнма пуçланă малтанхи кунсенченех мĕн пур вăйсемпе, мĕн пур майсемпе пирĕн çамрăк çĕршывăн хăватне вăйсăрлатма хăтланчĕç. Вĕсем темĕн чухлĕ вăрттăн каварсем, диверсилĕ актсем хатĕрленĕ. Вĕсем граждăн вăрçи тапхăрĕнче те, хуçалăха ура çине тăратнă тапхăрта та, пирĕн çĕршыв Сталин йулташ йертсе пынипе пĕтĕм халăх хуçалăхне социалисăмлă реконструкцилеме, çĕрмĕлйунлă хресченсене социалисăм çулĕ çине куçарма тытăннă чухне те çав ĕçе тунă. Анчах совет разведкин вичкĕн хĕççи тăшмансене, диверсантсене, шпионсене йарса тытнă. Йарса тытнă та пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пынă.

Микойан йулташ Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн йулашки тапхăрĕнчи, советсен каратељнăй органĕсене парти уйăрса лартнă талантлă, Сталинăн шанчăклă ученикĕ. Николай Иванович Йежов йертсе пыракн вăхăтри ĕçĕсем çинче тĕплĕн чарăнса тăрат. Йежов йулташăн сăмахĕ нихăçан та ĕçрен уйăралса каймаст. Мухтавлă ĕçлерĕ НКВД ку вăхăтра.

Вăл йутçĕршыв разведкисен троцкисла-бухаринла агенчĕсен шпионла йăвисене сĕмĕрсе тăкрĕ, пирĕн çĕршыва халăхăн чылай тăшманĕсенчен, истори кустăрмине кайала çаварма, пирĕн тăван çĕршыв халăхĕсенчен вĕсен телейлĕ социалисăмлă пурнăçне туртса илме хăтланнăскерсенчен, тасатрĕ.

Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕ пирĕн çĕршыври çĕршер пин ĕçсыннисен пурнăçне çăлса хăварчĕ, нумай заводсене, фабрикăсене çĕмĕрсе антарасран çăлса хăварчĕ. Халăхăн çулăмлă трибунне Сергей Миронович Кирова вĕлерекенсем пирĕн халăх пурнăçĕпе телейĕ çине тапăнасшăн пулнă. Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕ халăх тăшманĕсене Сталин йулташ вĕрентнĕ пек тыткаланă, мĕншĕн тесен пирĕн каратељнăй органсен пуçĕнче сталинла Нарком Йежов йулташ тăрат.

— Йежов йулташран сталинла ĕçлеме вĕренĕр,—тесе чĕнет чекиссене Микойан йулташ.—**вăл унччен те, халĕ те Сталин йулташран вĕреннĕ пек вĕренĕр!**

Йежов йулташ,—тет малала Микойан йулташ,—Шалти ĕçсен Халăх Комиссариатĕнче чекиссен, совет разведчикĕсен чаплă тĕрекне туса хучĕ. Чекиссен пĕтĕм çарне тата çӳлерех çĕклентерес тесе, вăл Шалти ĕçсен Халăх Комиссариатĕнчи работниксен тĕп тĕрекĕшĕн ăшшăн тăрăшма, ăна Дзержинский майлă, пирĕн парти майлă большевикла вĕрентсе çитĕнтерме пултарчĕ.

Вăл вĕсене социалисăма, пирĕн халăха çулăмлăн йуратма тата мĕн пур тăшмансене хирĕç кураймасăр кĕрешме вĕрентрĕ.

Çавăнпа пайан пĕтĕм Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕ тата чи малтан Йежов йулташ совет халăхĕн йуратаканнисем пулса тăраççĕ.

Микойан йулташăн çав сăмахĕсене нумай пинлĕ аудитори тăвăллăн алă çупса йышăнат.

Президиума Каганович йулташ тухат. Ăна пуху нумайччен алă çупса—хавассăн саламласа йышăнат.

Совет разведки халăха служит тăват, халăх çине тайанса, халăх пулăшнипе ĕçлет. Совет Союзĕн чи тĕрлĕ вырăнĕсенче рабочисем, колхозниксем, инженерсем, çитĕнниссемпе пионерсем Шалти ĕçсен Халăх Комиссариатне халăх тăшманĕсене—ирсĕр троцкисла-бухаринла фашисла шпионсене палласа илме пулăшни çинчен Микойан йулташ тĕлĕнмелле фактсем илсе кăтартат.

— Пирĕн кашни ĕçсынни—наркомвнуделцă!

Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕ хăрушлăх хăратса тăнă нумай пурнăçсене çăлса хăварчĕ кăна мар. Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕ нумай заводсене сиктерсе йарасран çăлса хăварчĕ кăна мар,—Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕ хăватлă Хĕрлĕ Çарпа пĕрле хăйĕн вичкĕн ĕçĕпе пирте передышкă нумайа пымала турĕ тата пире мирлĕн социалисăм тумали майсем туса пачĕ.

Вунултă çул хушши пирĕн çинче вăрçă хăрушлăхĕ çакăнса тăрат, анчах вăл татăлса анаймаст, мĕншĕн тесен пирĕн чи аван хĕçпăшалланнă Хĕрлĕ Çар тата мĕн пур хатĕрсемпе хĕçпăшалланнă разведчиксен Çарĕ тăшмансене пурне те отпор парат.

Епĕр Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн работникĕсене, вĕсем халиччен мĕнле мухтавлă ĕçленĕ, малашне те çавăн пекех ĕçлĕр тесе суйма пултаратпăр. Сыхăлăха тата ытларах çивĕчлетмеле, Сталин йулташ каланине манма йурамаст.


Пирĕн ăнăçусем мĕн чухлĕ ытларах пулĕç, тăшмансем пирĕн çине тапăнма, пире хавшатма, сиктерсе йама çавăн чухлĕ ытларах хăтланĕç, совет влаçĕн мĕн пур ăнăçăвĕсене сарса йама парас мар тесе, пире хирĕç кĕрешес ĕçре тĕрлĕ майсемпе йарса тытма çавăн чухлĕ ытларах хăтланĕç.

Епĕр Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн работникĕсене малашне те халăха служит туса, Ленин—Сталин партийĕн чи шанчăклă ывăлĕсем пулăр, чекиссен заветне упраса усрăр тата пирĕн халăхăн тăшманĕсене хирĕç пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешĕр тесе суйма пултаратпăр.

Парти, правителства, Сталин йулташ мĕн пур государства работникĕсем умне лартнă требованисем çинчен асăрхаттарат Микойан йулташ. Çав требованисем мĕнле пулмаллине Сталин йулташ декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Сталинский округри суйлавçăсен пухувĕнче каласа пачĕ.

— Сталин йулташ Ленин йышши совет работникĕсен сăнне пачĕ,—тет йулашкинчен Микойан йулташ,—Сталин—Ленинăн шанчăклă ученикĕ, вăл Ленин пекех пире малала илсе пырат, çавăнпа Ленин йышши работник Сталин йышши работник пулат. Пирĕнтен кашнийех, чăн-чăн большевик пулас, чăн-чăн политикăлă дейател пулас, тăшмансемпе пĕркилĕшӳсĕр пулас, пысăк ыйтусене татса панă чухне чăтăмлă та ирĕклĕ пулас, Ленин пулнă пек тата Сталин пек тӳрĕ те, таса кăмăллă пулас, хамăр халăха Ленин йуратнă пек тата халĕ Сталин йуратнă пек йуратас тесен **пĕтĕм ĕçре, пĕтĕм пурнăçра Ленин пек тата Сталин пек пулма тăрăшмала.**

Микойан йулташăн йулашки сăмахĕсем тăвăллăн алă çупни тата кăшкăрса саламланипе витĕнеççĕ.



Фриновский йулташ сăмахĕ

Пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем çирĕм çул кайарах, капиталиссен тата помещиксен влаçне сирпĕтсе антарса, хăйсен сулĕпе çĕнĕ, хĕвеллĕ пурнăç шатне çитсе тухрĕç.

Пĕтĕм капиталисăмлă тĕнче, вилĕм амантнă тискер кайăк пек, социалисăмăн малтанхи çĕршывне хирĕç шăртланса кайнă курайманлăхпа тăчĕ. Кивĕ тĕнчен пĕтĕм вăйне пире хирĕç мобилизацилене пулнă: вунтăватă государствăн интервенцийĕ, шпионаж, диверси, выçлăх, блокада. Капиталисăмлă тĕнче, çамрăк совет çĕршывне пăвса пăрахас тесе, çав пĕтĕм хĕçпăшал арсеналне пире хирĕç тăратнă.

Анчах пулаймарĕ! Граждăн вăрçи ĕçсыннисен çĕнтерĕвĕпе пĕтрĕ. Акă ĕнтĕ пирĕн тăван çĕршыв вунултă çул хушши мирлĕ пурнăç ырлăхĕпе, мирлĕ ĕçлевпе усă курат. Анчах пĕтĕм капиталисăмлă тĕнче тĕнчери пĕртен-пĕр социалисăм çĕршывне хирĕç вăрттăн вăрçассипĕр минутлăха та чарăнман. Йутçĕршыв разведкă органĕсем, ССР Союзне хирĕç вăрттăн вăрçас киревсĕр чейе мелĕсемпе хăтланса, пирĕн пата тăтăшах хăйсен агентурине йарса тăнă, пирĕн совет тылĕнче хăйсен çĕлен-калта йăвисене туса пынă, çапла вара вĕсем социалисăмлă государствăн çар, хуçалăх, политика хăватне хавшатасшăн, аркатса тăкасшăн пулнă, пулас вăрçăра пире çĕнтермелле тăвасшăн пулнă.

Тăшмансем урса кайса хирĕçнипе пăхса тăмасăр, епĕр хамăр çĕршыва социалисăмăн хăватлă держави туса хутăмăр. Унăн чаплă индустри, тĕнчери чи шултăра социалисăмлă йалхуçалăх пур.

Експлоататорла классене пĕтернĕ тата совет çĕршывĕнчи халăхсен нихăçан курман политикăлă тата моралђĕ пĕрлĕхне пурнăçа кĕртнĕ. Çав пĕрлĕх çинчен Аслă Совет суйлавĕсем питĕ лайăх каласа пăраççĕ.

Социалисăм çĕнтерĕвĕсем мĕн чухлĕ татăкланах пулса пынă, тăшман çавăн чухлĕ ытларах хăйар, лейе, ирсĕр пулса тăнă. Йĕрĕнчĕкрен те йĕрĕнчĕк, ирсĕртен те ирсĕр троцкиссем, зиновйевцăсем, бухаринцăсем, çав политикăла банкротсем, пуçĕпех çĕмĕрсе тăкнă капиталисăмла классен агенчĕсем, совет халăхне пăрахса тăшмана сутăннăскерсем, тăван çĕрне курттăм та вакăн намăссăр сутă тăвакан скерсем, шпионсен, диверсантсен, сыпвĕлеренсен ирсĕр банди пулса тăнă. Германи, Йапони, Польша т. ыт. разведкăсен агентури пулса тăнă сынсем тăшманшăн ансат тупăннă йапала пулса тăраççĕ.

Совет, хуçалăх тата парти аппарачĕн тĕрлĕ облаçĕсенче сăтăрлă ĕç туса пырса, тăшман çавăн пекех совет разведкине те хĕсĕнсе кĕрсе, ăна сиенлетме тата унăн çивĕч хĕçне мăкатма хăтланнă.

Ленинпа Сталин пире çапла вĕрентнĕ: хамăр ретсене тăшмансенчен, предателсенчен тата иккĕленсе тăракансенчен тасатсан çеç епĕр никам çĕнтерейми çирĕп пулса тăратпăр тата тăшмана çĕнтерсе çĕмĕрсе тăкма пултаратпăр.

Çав кăтартусене çирĕп тытса пырса, епĕр парти пулăшнипе Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсене предателсенчен тата изменниксенчен тасатрăмăр та хамăр ретсене тĕреклетсе пыратпăр.

Партин Тĕп Комитечĕ йертсе пынипе тата пирĕншĕн куллен ăшшăн тăрăшнипе, пирĕн партин çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе совет разведки йутçĕршыв разведкă органĕсен агенчĕсене—троцкисла-бухаринла пăрахăçсен отрйалне çĕмĕрсе тăкмала хытă çапрĕ. **(Алă çупаççĕ).** Пирĕн тăван çĕршывăн **халĕ лайăх организациленĕ, тĕреслеленĕ каратељнăй органсем пур. Вĕсем шпионсене, сăтăрçăсене, диверсантсене тата совет халăхĕн ытти тăшманĕсене сийенсĕрлетме пултараççĕ.**

Пирĕн çĕршыв капиталисăмлă окçан хушшинче хăватлă, мăнаçлă, патне пыма çук чулту пек çĕкленсе тăрат. Пирĕн тавра капиталисăмлă йĕритавралăхăн тăшманла тĕнчи, çав тĕнче пуçĕнче вăрçă хатĕрлекен чи пуççăр, чи агрессилĕ, штурмлă отрйад—фашисăм тăрат.

Мире сыхласа тăма, пирĕн халăха мирлĕ ĕçлемели май туса пама, пирĕн тăван çĕршывăн хуçалăхне, културине малала аталантарса пыма, оборона пултарулăхне тĕреклетме пире социалисăмлă хăватлă економикă кирлĕ. — Пирĕн вăл пур. **(Алă çупаççĕ).**

Пире хăватлă, вĕçĕ-хĕррисĕр пĕтĕм ăшран халăхшăн тăракан Хĕрлĕ Çар кирлĕ.—Пирĕн вăл пур. **(Алă çупаççĕ).**

Пире большевикла партилĕхне, идейлăхпа писĕхнĕ, партишĕн, халăхшăн, Сталин йулташшăн хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешекен, халăх тăшманĕсемпе пĕр килĕшми тата пĕр хĕрхенми кĕрешекен совет разведки кирлĕ. — **Пайан епĕр совет халăхне тата пирĕн правителствăна шанчăклăн ĕнентерсе калатпăр: пирĕн çавăн пек разведкă пур. (Алă çупаççĕ).**

Тулаçри тăшмана çĕнтерме тата унăн троцкисла-бухаринла ирсĕр бандине çĕмĕрсе тăкса кăкласа пăрахма совет халăхĕн политикăлă тата моралђĕ пĕрлĕхĕ кирлĕ.

Совет халăхĕ халĕ социалисăм çĕнтерĕвĕсене хӳтлеме, хăйĕн тăван çĕршывне хӳтлеме хатĕр тăрас тĕлĕшпе нихăçанхинчен те çирĕп пĕтĕçсе пĕр пулса тăрат. (Алă çупаççĕ).

Халăхпа çирĕп çыхăну тытнă, пысăк массăсем пулăшса тăнă, вĕсем Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсене йуратса шаннă никĕс çинче совет разведки хăйĕн ĕçне туса пырат.

„Государствă хăрушăсăрлăхĕн органĕсем, разведкă органĕсем халăхпа çав тери таччăн çыхăнса тăракан, çав халăхăн интересĕсене çав тери уççăн палăртса тăракан, халăх çĕнтерĕвĕсене хӳтлесе тăракан государствă тĕнчере урăх пĕрре те çук“ (Йежов).

Тăшмана çĕмĕрсе тăкнă, анчах ăна тĕппипех пĕтермен. Çавăн çинчен манса кайни касарма çук пысăк йăнăш пулнă пулĕччĕ. Капиталисăмлă йĕритавралăх пурăнма пăрахман, капиталисăмлă разведкăсем пирĕн совет çуртне хĕсĕнсе кĕмелли çĕнĕ çулсем, çĕнĕ мелсем шырĕç, çĕр çинчен шăлса пăрахнă кивĕ кадрсем вырăнне вĕсем çĕнĕ кадрсем чăмăртама хăтланĕç, **тупса палăртман** тăшмансем хушшинче вĕсем хăйсене валђи татах агентура тупма хăтланĕç, çирĕп мар, иккĕленекен елементсене хăйсен майлă çавăрма тăрăшĕç.

Халĕ совет разведкин задачи çакăнта пулат: унăн хăйĕн ĕçне лайăхлатса пымала, тăшмана палласа илмели лайăхрах мелсем шыраса тупмала, тăшманăн киревсĕр чейе, сăтăрлă ĕçне çийĕнчех палăртса çĕмĕрсе тăкамала, предателĕн вăрттăн каварĕсене тата плансене пĕçсе çитме памала мар.

Задач çакăнта пулат: чекис органĕсен тасалăхне куç шăрçи пек сыхламала, ăна йутсем, тăшмансем, çирĕп мар çынсем хĕсĕнсе кĕресрен сыхламала.

Çирĕм çул кайарах, ВЧК туса хурсан, парти унăн пуçне хурçă пек çирĕп большевика, революци рыцарне Феликс Дзержинскийе уйăрса лартрĕ. Тăшмансене хирĕç кĕрешнĕ вут-хĕмре вăл йертсе пынипе пĕтĕм ăшран партишĕн тата халăхшăн тăракан чекиссен кадрĕсем ӳссе çитĕнчĕç.

Фашисăм агентурине — троцкисла, зиновйевла, бухаринла сутăнчăксене, сыпвĕлеренсене, фашисла разведкă органĕсен агентурине, капиталисăм реставраторĕсене çĕмĕрсе тăкнă историлĕ татăклă тапхăрта Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕ пуçне парти хăйĕн шанчăклă ывăлне, Сталин йулташăн тусĕпе соратникне—Николай Иванович Йежова **(нумайччĕн алă çупаççĕ)**—хурçă вăйлă, революцилĕ пысăк сыхăлăхлă, вичкĕн ăслă, вĕçĕ-хĕррисĕр партипе совет халăхĕшĕн тăракан, сăмахĕ нихăçан та ĕçрен уйăрălса тăман çынна уйăрса лартрĕ. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ, вăл хавассăн саламланине куçат).**

Феликс Дзержинский пекех, вăл совет разведкин ĕçне куллен кун большевикла партилĕхпе, принциплăхпа сăрхăнтарса пырат, кадрсен хăйсен партилĕ, чекисла тивĕçĕ çине рыцарла пăхма вĕрентсе çитĕнтерсе пырат, халăх тăшманĕсене хирĕç большевикла принциплăхпа, пĕр килĕшми тата пĕр хĕрхенми кĕрешме вĕрентсе çитĕнтерсе пырат.

Пире сталинла ĕçлеме вĕрентет. **(Алă çупаççĕ).**

Чекиссен коллективĕ совет халăхне, хăйĕн правителствине, Ленин—Сталинăн аслă партине, халăхсен çулпуçне Сталин йулташа,—унăн йачĕ ĕçсынни етемлĕхĕн мĕн пур çĕнтерĕвĕсене, шанчăкĕсене тата ĕмĕчĕсене палăртса тăракан символ пулса тăрат, — çапла шанчăклăн ĕнентерсе калат: вăл, чекиссен коллективĕ, совет халăхĕн аслă шанăçне тӳрре кăларĕ.

Епĕр халăх ĕçĕшĕн, парти ĕçĕшĕн, çулпуçшăн — Сталин йулташшăн хамăр вăйсене шеллесе тăмăпăр, хамăр пурнăçа та парăпăр. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Ленинград хулинчи пуху

ЛЕНИНГРАД, декабĕрĕн 20-мĕш ВЧК—ОГПУ—НКВД çирĕм çул тултарнă йатпа Урицкий Дворецĕнче Ленинград хулинчи парти, совет тата профсойуз активĕн чаплă пухувĕ пулса иртнĕ.

Тăвăллăн алă çупса хисеплĕ президиума ПĔК(б) Парти Тĕп Комитечĕн Сталин йулташ пуçпулса тăракан Политбюрона тата Димитров, Телђман, Долорес Ибаррури, Хозе Диас йулташсене суйлаççĕ. Пухува пынисем пĕтĕм ĕç етемлĕхĕн çулпуçĕ Сталин йулташ йатне хăватлă оваци туса кĕтсе илеççĕ. „Сывă пултăр аслă Сталин!“, „Аслă Сталина „урра“! тесе кăшкăрнисем йанăраса каяççĕ.

ВЧК—ОГПУ—Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн мухтавлă ĕçĕсем çинчен Угаров йулташ доклад туса панă, ăна пуху алă çупса кĕтсе илнĕ.

Шаповалов йулташ пухури çынсене Н-ски Хĕрлĕ йалавлă чикĕри отрйад йачĕпе чаплă йубилей çитнипе сывлăх сунна.

Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Ленинград облаçĕнчи Управлени началђникĕ Заковский йулташ сăмах тухса каланине пуху ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Унăн сăмахне алă çупса темиçе хут хапăлланă.

Пуху пĕр сасăпах ВЧК—ОГПУ—Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн мухтавлă ĕçне пайлă тăвакан тата наркомвнуделцăсене, сталинла Наркома, Йежов йулташа, чаплă йубилейпе сывлăх сунакан революци йышăнчĕ.

(ТАСС)

Халăха Ленин пек йуратăр

ВĂРНАР (хамăр корр). Декабĕрĕн 18-мĕшĕнче Кăкшăмри „Ĕç йалавĕ“ колхозĕнчи çамрăксен пухувĕ пулса иртрĕ.

Çамрăксен пухуне комсомол комитет секретарĕ И. Лукин йулташ уçрĕ. Пĕрремĕш ыйтупа комсомолец Филиппов йулташ сăмах каларĕ. Вăл çамрăксен ĕлĕкхипе халђхи пурнăçĕ çинчен, тата коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ суйлавра çĕнтерни çинчен, Аслă Совет депутачĕсене çĕршывăн чи шанчăклă çыннисене суйлани çинчен каласа пачĕ.

Ун хыççăн çамрăксем Аслă Совета коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем суйланнишĕн хăйсен савăнăçне тухатуха хĕрӳлĕ сăмахсемпе каларĕç.

— Йулташсем, çамрăксем! Декабĕрĕн 12-мĕшĕ Аслă Совета суйланă кун пирĕншĕн нихăçан пулман пысăк праçник пулса тăчĕ. Ку кун епĕр коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ никам çĕнтерейми вăй хăват пулса тăнине пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартрăмăр. Кунашкал çирĕп блокпа епĕр темле тăшмана та кирек хăш вăхăтра та çапса аркатма пултаратпăр.

Пайан пирĕншĕн темĕр пысăк савăнăç—епĕр хамăрăн блок депутачĕсем Аслă Совета пурте суйланнине пĕлтĕмĕр. Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтерчĕ. Çакăншăн епĕр пурте савăнатпăр. Коммунисла парти тата унăн хурçă пек çирĕп çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе, епĕр кунран-кун, çулран-çул çĕнĕ çĕнтерӳсем туса пыратпăр,—тет Кудрйавцев Иван.

— Мĕншĕн-ха пирĕн халăх пурте пĕр çын пек пулса суйлава хутшăнчĕ? Мĕншĕн тесен пирĕн халăх коммунисла партипе пĕр шухăшлă—çĕнĕ çĕнтерӳсем, коммунисăм патне кайассипе. Пирĕнтен кашнийех хăйĕншĕн парти йепле тăрăшнине лайăх ăнланат. Акă мĕншĕн коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн совет халăхĕ пысăк хавасăлăхпа сасăларĕ.

Суйлав кунĕ маншăн, пĕрремĕш хут суйлава хутшăнаканшăн, питĕ пысăк историлĕ праçник пулса тăчĕ. Ку кун епĕ чи малтанхи хут суйлава хутшăнса хамăн сассăма çĕршывăн шанчăклă та мухтавлă тивĕçлĕ ывăлĕсемшĕн—Чкаловшăн, Пумпуршăн, Красновшăн сасăлама тӳрĕ килнĕшĕн питĕ савăнатăп.

Манăн çĕнĕ депу атсене çакна çеç сĕнсе калас килет: вĕсем халăха Ленин пек йуратчĕр, Сталин халăха чыслănă пек чыслаччăр, вара епĕр те вĕсене пулăшса пыăпăр,—тет комсомолец Леонтйев Иван.

Ку ыйтупа çамрăксем нумайăшĕ тухса каларĕç. Вĕсем пурте çĕнĕ депутатсене чĕррĕн саламлаççĕ, вĕсене пурне те вăрăм сывлăх сунчĕç.

Пуху иртнĕ хыççăн, çамрăксем вăйă-ташăсем выљаса савăнчĕç.

Ст. Улангай.

Кăкшăмри „Ĕç йалавĕ“ колхоз çамрăкĕсен пĕрлешӳлĕ пухувĕ йышăннă резолюцирен

Çĕршывăн шанчăклă та мухтавлă çыннисем, партипе правителства, пĕтĕм халăх умĕнче хăйсен хастарлăхĕпе тата пултарулăхĕпе чапа тухнă йулташсем ССР Союзĕн Аслă Совет депутатне суйланнине пĕлсен, пирĕн çамрăк чĕресем нихçан хинчен те хавасла тата саккунлă савăнăçпа тулса ларчĕç. Суйлавра коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтерчĕ. Пирĕн пек çамрăксенчен те Аслă Совета депутата суйланни сахал мар. Çакăншăн епĕр питĕ савăнатпăр.

Пирĕн çамрăксем мĕн пĕчĕккĕрен пех хăйсен ăсĕнне етемлĕхĕн чи малта пыракан идейăпа, интернационалисăмла халăх туслăхĕн идейипе пуйанлатаççĕ. Çак аслă идейăсемпе совет çамрăкĕсене коммунисла парти хĕçпăшаллантарат.

Коммуниссемпе партире тăманнисен никам çĕнтерейми çыханăвĕ Совет çĕршывĕн тĕрекне татах та çирĕплетет, стахановла рекордсене нумайлатат, социалисăмла културăна татах та çӳле пусăма хăпартат. Çакăншăн епĕр чĕререн савăнатпăр та ĕнтĕ.

Епĕр, колхоз çамрăкĕсем, пирĕн кандидатсем Аслă Совет депутатне суйланнине хисеплесе, хамăрăн пĕлӳве политикăла кружоксем тата техникăла кружоксем урлă вĕренсе пырса татах та çӳле хăпаратпăр. Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хушшинчи сыхăнăва нихçанхинчен çирĕпрех тытатпăр. Хамăрăн кану вăхăчĕсене татах та савăнăллăрах ирттерме, колхоз производствинче стахановла ĕçлеме пулатпăр.

Сывă пулччăр пирĕн коммуниссемпе партире тăманнисен блок депутачĕсем!

Сывă пултăр Аслă Советăн пĕрремĕш депутачĕ—пире културлă та пуйан пурнăç туса паракан большевиксен партийĕ, халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин йулташ!

Суйлавçăсен наказне пурнăçламаççĕ

ШĂХАСАН. Малти Унтавăш йалсоветне суйлавçăсем 1934 çулта тĕрлĕ ĕçсем тума наказсем парса хăварнă, анчах наказа йалсовет тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пымаст.

Наказра 1935 çултах ĕнесĕрлĕхе 100 проценчĕпех пĕтерме кăтартнă, анчах ку ĕçе пурнăçламан. Пер Кайри Унтавăшри Клим Ворошилов йачĕпе тăракан колхозра ĕнесĕр хуçалăхсем—6 (Платовов, Порфирйев, Йаковлев, Петров т. ыт.)

Çавăн пекех сыснасен йышне наказра 100 чун ӳстермелине кăтартнă, анчах йалсовет ку ĕçе те пурнăçа кĕртмен. 1934—35 çулсенче Кайри Унтавăшри Клим Ворошилов йачĕпе тăракан колхозăн сыснаферминче 101 сыснана çитнĕ, 1936 çулта 27 сысна çеç йулнă, вилсе пĕтнĕ. 1937 çулта 52 сыснана çеç çитнĕ. Сыснасен шутне ӳстерес тĕлĕшпе йалсовет нимĕн те тумаст. Çавăн пекех колхоз правленийĕ те сыснасене пурăнмашкăн çителĕклĕ таран условисем туса паман (фермă маччине сарман, сысна çурисем валђи ăша пӳлĕм çук, вите урайне сарман т. ыт. те). Çавна пулах сыснасен йышĕ пĕр Клим Ворошилов йачĕпе тăракан колхозрах 50 йахăн чакнă.

Тата наказра Кайри Унтавăшра кӳлĕне тасатма, урамсене илемлетме хушса хăварнă. Ку ĕçсене те пурнăçламан. Малти Унтавăшра клуб, Кайри Унтавăшра пуçламĕш шкул тума хушса хăварнă, çак наказсене те пурнăçа кĕртмен. Çавна пулах йал ачисем 9 йе 10 çула çитиччен пуçламĕш шкула вĕренме çӳремеççĕ. Халĕ пĕр пĕчĕк пӳртре 56 ачана шăнăçтарса вĕрентеççĕ.

Йа. Степанов.

Совет Союзĕпе пĕрремĕш вырăна тухнă

Кăçалхи сĕнтабĕр уйăхĕнче Мускав хулинчи „Спорт и туризм“ ертелри физкултурниксен коллективĕ „Спартак“ обществин мĕн пур физкултура коллективĕсем патне Октябĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăртува хутшăнма чĕнсе çыру йанă.

Çак чĕнӳ тăрăх Чăваш республикĕнчи чылай коллективсем, сăмахран, Йепреçри „Кооплеспром“ ертелри, Çĕрпӳ районĕнчи Туçи промколхозĕнчи, Турхан районĕнчи Липовкари, Енĕшкассинчи (Трак р.) физкултура коллективĕсем Октябер революци 20 çул тултарнă йатпа социалисăмлă ăмăртува хутшăнчĕç.

„Спартак“ обществин Тĕп совечĕ çак кунсенче Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту итогĕсене туса тухнă. Ăмăртура чи лайăх кăтартусем тунăшăн Йепреçри „Кооплеспром“ ертелри физкултурниксен коллективне Совет Союзĕпе пĕрремĕш приз—Тĕп советăн куçса çӳрекен хĕрлĕ йалавĕ тата 7.000 тенкĕ укçан панă.

Совет Союзĕнчи пиншер коллективсем хушшинчен Йепреçри ертел коллективне пĕрремĕш приз пани вăл пĕрре те ăнсăртран пулман. „Кооплеспром“ ертелри коллектив республикăри тата районри спартакиадăсемпе ăмăртусене йаланах хутшăнса выљат. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ вăл футбол тата çăмăл атлетикă йенĕпе республикăра пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрат. Чăваш республикĕнчи рекордсменсемпе чемпионсем пурте тенĕ пекех „Кооплеспром“ ертелĕн коллективĕнчен тухаççĕ. Хăвăрт чупас йенĕпе рекордсмен шутланакан Т. И. Петров йулташа пĕтĕм республикă пĕлсе тăрат. Е. Кузинăпа Йегоров ГТО 1-мĕш сыпăкĕпе кăçал чемпиона тухрĕç. 10 километр хушăна йĕлтĕрпе чупса тухас тĕлĕшпе Пашкова й республикăра иккĕмĕш вырăн йышăнса тăрат (Гушчина рекордсменка хыçĕнчен). К. Пашкова, Е. Кузина, С. Василйева йулташсем физкултура йенĕпе çеç мар, тата хăйсен заводĕнчи производствăра та чи лайăх стахановкăсем шутланаççĕ.

Кăçал çулла физкултурниксен коллективĕ хăйĕн укçи-тенкипе 13.000 тенкĕ тăракан стадион турĕ. Килес çул стадиона татах аслăлатаççĕ, унта чупмали çул, трибуна т. ыт. тăваççĕ.

Коллектив составне 130 çынна çитернĕ. Кăçал вăл коллективран 20 çын Хĕрлĕ Çара кайнă.

ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленес кампанийе физкултурниксем активлăн хутшăнса ĕçлерĕç. Хĕллехи спорт сезонне коллектив питĕ лайăх хатĕрленсе пĕтсе илчĕ, декабĕр пуçламĕшĕнчех катокпа йĕлтĕр станцийĕ ĕçлеме тытăннă. 1937—1938 çулхи хĕллехи сезонра физкултурниксем çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хатĕрленеççĕ.

Г. Иванов.

Тӑтӑклӑ обйазателствӑсем илеҫҫӗ

СЕНТӖРВӐРРИ. Мускав тата Мускав облӑҫӗнчи стахановецсем чӗнсе калани районри пур предприйатисемпе производствӑлӑ ертелсенче те пысӑк хавасланӑхпа сӳтсе йавӑҫҫӗ. Декаберӗн 20-мӗшӗнче чӗневе судоверфра, спирт заводӗнче тата Ҫӗнӗ салари катка-пичке заводӗнче сӳтсе йаврӗҫ. Ҫӗнӗ салари катка-пичке заводӗнче чӗневе сӳтсе йавма пухӑннӑ пухура Бибиков рабочи ҫапла калаҫӗ:

— Пирӗн завод стахановла рекордсен сталинла вунӑкунлӑхӗнче стахановла йухӑма нихҫанхинчен анлӑн вӑйлатрӗ. Заводра стахановецсемпе ударниксен йышӗ вӑйлӑн ӳсрӗ. Пирӗн завод ҫак иртнӗ вунӑкунлӑхра 1937 ҫулхи плана 106 процент тултарчӗ. Епӗ хам вунӑкунлӑх пуҫланнӑранпа катка кӑшӑлӗсем ҫапас плана кулленех 200 процентшер тултарса пытӑм. Епӗр халӗ Мускавпа Мускав облӑҫӗнчи фабрик-заводсенчи стахановецсем чӗнсе калани пысӑккӑн кӑмӑлласа йышӑнтӑмӑр. Стахановла рекордсен сталинла вунӑкунлӑхӗнче ҫӗнӗ ҫулччен тӑсма йышӑнни, вӑл питех те паха ӗҫ. Епӗ ку вунӑкунлӑхра хамӑн кулленхи нормӑна 250 процентран кайа мар тултарса пыма пулатӑп. Заводри кашни рабочийӗ ҫавӑн пек ӗҫлеме чӗнетӗп,—терӗ.

Судоверфпа спирт заводӗнчи рабочисем те стахановла рекордсен сталинла вунӑкунлӑхӗнче пысӑк ҫитӗнӳсем тума хӑйсем ҫине тӑтӑклӑ обйазателствӑсем илчӗҫ.

В. Василйев.

Кулленех 560 мӑшӑр атӑ-пушмак кӑларассишӗн

Шупашкарти тир-сӑран завод коллективӗ суйлав умӗнхи сталинла вунӑкунлӑха хутшӑнса ӗҫлесе ҫулталӑкри плана ытлашшипех тултарчӗ.

Декаберӗн 20-мӗшӗнче Мускавпа Мускав облӑҫӗнчи стахановецсем чӗнсе калани сӳтсе йавнӑ хыҫҫӑн рабочисемпе инженерла техникла работниксем пурте пӗр хавасланӑхпа ҫӗнӗ ҫулччен кулленех 560 мӑшӑр атӑ-пушмак тӑвассишӗн кӗрешӗве тухрӗҫ. Вӗсем каҫалхи декабӗр тата 1938 ҫулхи йанвар уйӑхӗсене ҫӗнӗ рекордсен уйӑхӗсем тума йышӑнчӗҫ.

Кӗрешӳ вӑйлансах пырать. Бригадӑсем, рабочисем кулленех-кун ӳсӗмсем тӑваҫҫӗ. Мартӑн 8-мӗшӗ йачӗпе тӑракан бригадӑ членӗ Фадейева йулташ нормӑна декаберӗн 19-мӗшӗнче 131,4 процент, 20-мӗшӗнче 131,4 процент, 21-мӗшӗнче 155 процент тултарнӑ. Ленин йачӗпе тӑракан бригадӑ членӗ Сергейев йулташ декаберӗн 19-мӗшӗнче нормӑна 217 процент тултарнӑ пулсан, 21-мӗшенче 230 процент тунӑ. Ромашов йулташ нормӑна кулленех 172 процент тултарса пырать. Скачковӑпа Сурйанинов йулташсем те пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫапла завод коллективӗ хӑй ҫине илнӗ обйазателствӑна пурнӑҫа кӗртме пултарнине кӗске вӑхӑтрах кӑтартрӗ. Декаберӗн 19-мешӗнче пӗтӗмпе 450 мӑшӑр атӑ-пушмак кӑларнӑ пулсан, 20-мӗшӗнче 500 мӑшӑр, 21-мӗшӗнче 560 мӑшӑр кӑларнӑ.

Заводӑн ҫӗнӗ ҫитӗнӳвӗ

ҪӖМӖРЛЕ. Аслӑ Совет суйлавӗнче коммунистсемпе партире тӑманнисен блокӗ ҫӗнтерӳ тунӑ йачӗпе пухусем пулса иртеҫҫӗ. „Большевик" заводра ӗҫлекенсем пухура татах та лайӑхрах ӗҫлеме, стахановла йухӑма анларах сарса йама обйазателствӑсем илчӗҫ. Халӗ вӑл обйазателствӑсене ӑнӑҫлӑн тултараҫҫӗ. Декаберӗн 17-мӗшӗнче завод плана 124,6 процент тултарчӗ. Пархисенко коммунист йертсе пыракан 2-мӗш бригадӑ ҫак кун нормӑна 126 процент тултарса, ҫӗнӗ ҫӗнтерӳ турӗ. Выгрузчиксенчен Шубинин йулташӑн ҫитӗнӳне палӑртмала. Вӑл декаберӗн 17-мӗшӗнче плана 141 процент тултарчӗ.

Иваницкий.

Директор „диплом" илме хатӗрленет

Шупашкарти макарон фабрикӗ йулашки уйӑхсенче сывтери йапӑх ӗҫлеме пуҫларӗ. Декаберӗн 4-мӗшӗнче фабрик вутӑ пулман пирки 2 сехет ӗҫлемесӗр тӑчӗ. Сушильнӑй цех та ҫак кун ӗҫлеймерӗ. Хӑшпӗр станоксем ӗҫлеме йурӑхсӑр, ҫӗмрӗк лараҫҫӗ. Сырйо ҫитмест.

Августӑн 19-мӗшӗнче пулса иртнӗ парти пухувӗнче фабрик директорӗ Данилов, сентаберӗн 15-мӗшчен фабрика йусаса ҫитерме сӑмах панӑччӗ. Халӗ ӗнтӗ унтанпа вӑхӑт 4 уйӑх иртрӗ. Анчах фабрик ҫав-ҫавах йусавсӑр ларать. Хӑшпӗр йусанӑ машинсем те пахалӑх йенчен кайра тӑраҫҫӗ, вӗсене ҫийелтен ҫеҫ йусанӑ.

Фабрикри ҫитменлӗхсемпе ирсӗрлӗхсем ҫинчен ПСК(б) Парти хула комитетне те пӗлтернӗ Хула комитечӗ ҫеҫе тӗрӗслесе ответ тыттарма прокуратурӑна йанӑ пулнӑ. Вӑхӑт чылай иртрӗ ӗнтӗ, улшӑну ҫук. Фабрик директорӗ Данилов ним тумаллине кура ирсӗр ӗҫсем тума чарӑнмасть. Йурӑхсӑр машинсем илсӗ укҫа пӗтерет, йе кирлӗ мар ҫӗре йарса расхутлать. Пӗтӗмпе шутласан кун пек расхутланӑ укҫа 52 пин тенкӗ шутланать.

Даниловран фабрика хӑҫан йусаса пӗтерессине ҫинчен ыйтсан, вӑл йаланах „хам йусатӑп, епӗ руководител. Йусаса пӗтеретӗп те, диплом илетӗп" тет.

Директор ҫапла ӗҫлесе пынӑран та ӗнтӗ фабрикра стахановла йухӑм чарӑнса ларнӑ.

Ломашкин.

Трахомработник ҫырувӗ

Шӑхран йалсоветне кӗрекен Виҫпӳрт йалӗнчи (Патӑрйел р-не) трахпункт 1936 ҫултанпа ӗҫлет. Районри сывлӑх пайӗ мана, ӗҫлеме пултаратӑн тесе, кунти трахпункта уйӑрса ҫирӗплетрӗ.

Малтанах ӗҫе пуҫарса йама йӑвӑр пулчӗ. Трахомлисенчен чылайӗшӗ еп каласа ӑнлантарнине итлесшӗн марчӗ, трахпункта кӑмӑлламасчӗҫ. Ҫапах та икӗ ҫул хӳшши ҫине тӑрса ӗҫлесе, массӑна хам йенеле ҫавӑртӑм. Хальхи вӑхӑтра трахпункта трахомлисем кулленех 45—50 ҫын ҫӳреҫҫӗ. Епӗ вӗсене тимлӗн емеллетӗп, трахом чирӗнчен мӗнле сыхланмаллине ӑнлантарса паратӑп. Тасалӑха вӗрентетӗп.

Анчах мана йалти организацисенчен никам та пулӑшакан ҫук. Йалсоветӗ трахпункт ҫине ҫавӑрӑнса та пӑхмасть. Трахпунктра кирлӗ йапаласене—супӑнь, емел туяврашӗсене йалсоветӗ укҫа пама пирки, хамӑн укҫапах илме лекет. Ӗҫе ҫакӑн пек хисеплеменни мана питех те кӳрентерет.

Трахомработница Грачова.

1375 тенкӗлӗх сарнӑ

СЕНТЕРВӐРРИ. Камайево йалсоветӗ ҫумӗнче ӗҫлекен Петров почтальон участкине 135 хуҫалӑх кӗрет. Петров йулташ ҫак участкӑра 1938 ҫулшӑн тӗрлӗрен хаҫат-журналсем пӗтӗмпе 198 екземпльар, 1375 тенкӗлӗх сарнӑ. Ку тӗлӗшпе вӑл малала ӗҫлет.

Лукин.

Гудов йултӑшӑн ҫӗнӗ рекорчӗ.

С. Орджоникидзе йачӗпе тӑракан станоксем тӑвакан заводри стахановец И. И. Гудов йулташ декаберӗн 7-мӗшӗнче ӗҫ нормине пӗр сменӑра 4.582 процент тултарнӑ. Ӗҫрен тухнӑ ҫӗре партин Мускав комитечӗн секретарӗ Н. С. Хрушчев йулташ завода пырса Гудов йулташа паха ҫӗнтерӳ тунӑ йатпа саламланӑ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: И. И. Гудов йулташ станок умӗнче. Ӑна Мускаври Ленинский суйлав округӗ тӑрӑх Союз Советне депутата суйланӑ.

(Союзфото).

Хаҫатсене пӑхса тухни

Манма йураман пысӑк ӗҫ

Йалсоветӗ государствӑ влаҫӗн вырӑнти органӗ пулать. Вӑл партипе правителствӑ решенисене пурнӑҫа кӗртет. Йалсоветӗ совет йалӗн пурнӑҫӗн организаторӗ, ӗҫсыннисен интересӗсене сыхлаканӗ, вӗсен ӗҫӗсене тӑваканӗ. Йалсоветӗн ӗҫӗнче темиҫе теҫеткешер, ҫӗршер, пиншер ҫын государствӑ управленийӗ ӗҫне вӗренеҫҫӗ.

ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйласа иртӗрнӗ кампанире ӗҫсыннисен политикӑла хастарлӑхӗ калама ҫук вӑйланчӗ. Ӗҫхалӑхӗ хӑй суйланӑ Советсене нихӑҫанхинчен лайӑх ӗҫлеме хушать. Советсен, уйрӑмах йалсоветӗсен авторитечӗ йумай ҫӗклейчӗ. Ҫакна советсен ҫумӗнчи тӗрлӗ секцисен ӗҫӗсене суйлавҫӑсем хӑйсем хастарлӑн хутшӑнни, секцисен ӗҫӗ лайӑхланни ҫирӗплетет.

Анчах тӑшмайла етемсем те сывӑрмаҫҫӗ. Вӗсем хӑшпӗр руководителсен тимсӗрлӗхӗпе, сыхӑлӑх ҫуккипе усӑ кураҫҫӗ. Тӑшманла етемсем йалсоветсене те хӗсӗнсе кӗреҫҫӗ, вӗсем пире хирӗҫле ӗҫ тӑваҫҫӗ. Вӗсем, Совет органне кӗрсе вырнаҫнӑ халӑх тӑшманӗсем Совет влаҫӗн саккунӗсене, партипе правителствӑ решенийӗсене пӑсаҫҫӗ, халӑха хирӗҫле ӗҫ тӑваҫҫӗ. Пирӗн задачӑ—тӑшмансен совета хирӗҫле ӗҫне ҫийӗнчех ҫапса аркатса, совет органӗсене тата тӗрӗклӗ тӑвасси пулать.

Сталинла Конституци кӑларса тӑратнӑ ыйтусемпе совет органӗсем мӗнле ӗҫлеҫҫӗ? Ҫаксене кашни районти хаҫатӑнах ҫутатмала. Йалсоветсене, секцисене, депутатсене хӑйсен ӗҫне лайӑхлатма пулӑшмала.

Анчах ҫак ӗҫе районсенчи хаҫатсенчен нумайӗшӗ туса пымаҫҫӗ. Вӗсен страницисенче йалсоветсен, секцисен, депутатсен лайӑх ӗҫӗсене кӑтартни те, ҫитменлӗхсене критиклени те, тӑшманла ӗҫсене тупса тапалтарни те ҫук. Пирӗн алӑра „СОЦИАЛИСАМШӐН" (Канаш р.), „КОЛХОЗНИК ҪУЛӖ" (Шупашкар р.) хаҫатсем. Епӗр вӗсен страницисенче йалсоветсен ӗҫӗ пирки ҫырнӑ статйасемпе заметкӑсене шыратпӑр. Анчах ҫак хаҫатсем ҫинче йалсоветсен ӗҫӗ ҫинчен ҫырнине тупса вулаймӑн. „СОЦИАЛИСАМШӐН" хаҫат колхозлӑ йал ҫӗнелсе пыни ҫинчен час-часах ҫырать. Анчах йала социалисӑмла ҫӗнетес ӗҫре йалсоветсем мӗн туни ҫинчен ҫырма хӑрать пулас. Акӑ ноябрӗн 24-мӗшӗнче „ПАЙАНХИ СИККАССИ" йатлӑ статйа пичетлесе кӑларать. Сиккасси ӳсет. Хаҫат ҫырнӑ тӑрӑх:

„Палла пурӗ 307 ҫӗнӗ пӳрт. Вӗсенчен 1937 ҫулта лартнисем 83 пӳрт. Ҫӗвӗ ҫӗлемели машинсем 51, 364 сехет, 197 тимӗр койкӑ, 127 балалайкӑ, 8 патефон, 9 хуткупӑс, 3 гитарӑ, 2 мандалинӑ. Палта 10 ҫул вӗренмели шкул, унта 150 ача вӗренеҫҫӗ, 76 колхозник килӗнче библиотекӑ пур, 15 колхозник килӗнче радио пур".

Малала статйара колхозниксен пурнӑҫӗ пуйанланса пыни ҫинчен сӑмах пырать. Сиккасси тунӑ ҫитӗнӳсем ахаль пулман. Вӗсене партипе совет органӗсем йертсе пынипе тунӑ. Анчах „СОЦИАЛИСАМШӐН" Сиккасси ҫинчен ҫырнӑ чухне пулни те, йалсоветӗн, унӑн депутачӗсен ӗҫӗсене кӑтартма аса илмен.

Хаҫатӑн Советсен ӗҫӗ ҫине ҫавӑрӑнса пӑхма ҫалтавсем пулнӑ. Хаҫат хӑйех:

„Йалсоветӗсем чылайӗшӗ хӑйсен ответлӑхне манаҫҫӗ. (Камсем, вӗсен йачӗсене хаҫат кӑтартмасть). Йалсоветӗсем епӗр халӗ налогсем, тӗрлӗ тӳлевсем пухмастпӑр, тесе хуҫалӑх ӗҫӗсенчен айакра тӑракан вырӑнче пулма шутлаҫҫӗ", тесе ҫырать.

„Паллах ӗнте, йалсоветӗсем хуҫалӑх ӗҫӗсенчен уйӑрӑлма пултараймаҫҫӗ. Вӗсен хуҫалӑх ӗҫӗсемпе те, укҫа-тенке пухас тата ытти ӗҫсене те йертсе пымала. Анчах тӗп ӗҫе—советсен массӑлӑ ӗҫне, халӑха совет влаҫӗн саккунӗсене ӑнлантарса парас, колхозсене, шкулсене, больницӑсене, вулав ҫурчӗсене йертсе пырас ӗҫе манмала мар. Ҫаннипе илсен, Канаш районӗнчи шкулсене, колхозсене, больницӑсене йертсе пырас ӗҫ кирлӗ пек пулса пымасть. Ҫакна хаҫатӑн кашни номӗрӗнчех шкулсенчи, колхозсенчи, вулав ҫурчӗсенчи, ҫитменлӗхсем ҫинчен пичетленсе тухакан ӗҫйалькорсен ҫырӑвӗсем кӑтартаҫҫӗ. Ҫак ӗҫсене лайӑхлатасси совет органӗсенчен, чи малтан йалсоветсенчен килет. Апла пулсан, хаҫатсен советсен ӗҫӗсем ҫинчен ҫырмала, вӗсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене критиклемеле, тӑшманла етемсене тупса палӑртмала. Хаҫатсен ҫав йалкорсем паракан сигналсем тӑрӑх каймала, начар ӗҫӗн сӑлтавне тупмала.

„Колхозник ҫулӗ" те ҫавӑн пекех. Вӑл совет органӗсен ӗҫӗсене ҫутатасси ҫинчен пачах манса кайнӑ. Темӗн ҫинчен те ҫырать, анчах пысӑк ӗҫе манаҫа хӑварать.

Сталинла Конституци тӑрӑх советсен тӗп ӗҫе халӑха политикӑла воспитани парасси пулать. Районти хаҫатсен советсен ӗҫӗсем ҫине тимлӗн пӑхмала, вӗсен депутатсен, суйлавҫӑсен сассисене илмелле, наказсем ҫинчен аса илмеле. Совет органӗсенче революцилле сыхӑлӑха сухатнисем ҫук-и? Маска тахӑнна тӑшмансене, троцкистсене, бухаринцӑсене, буржуала националистсене хирӗҫ совет органӗсем мӗнле кӗрешеҫҫӗ? Совет демократисӑмне пӑснисем ҫук-и? Ҫӗршыв оборонине тӗреклетес тӗлӗшпе йалсоветӗсем мӗнле ӗҫлеҫҫӗ? Бӳрократисӑм, волокита, сын ҫине чунсӑр пӑхни ҫук-и? Ҫак ыйтусем районти хаҫатсенче пысӑк вырӑнта тӑмала. Вӗсем ҫинчен витӗмле ҫырмала.

Кӑна пӗр редакци кайӗпех тӑма май ҫук. Редакцисен совет активне: райӗҫтӑвкомра ӗҫлекенсене, йалсовет председателӗсене, йалсовет членӗсене, депутат ушкӑнӗсен руководителӗсене, секционерсене хаҫат ӗҫне йавӑҫтармала. Анчах „Социалисӑмшӑн" тата „Колхозник ҫулӗпе" хаҫатсем ҫине ҫырса тӑракансем хушшинче ҫав авторсем ҫук, пур пулсан та, питӗ сахал. Ҫавӑнпа та вӗсем совет строителствин ыйтуне ҫутатассине манаҫа хӑварнӑ.

Пушар дружинисене йертсе пымаҫҫӗ

Пушар халӑхӑн хайар тӑшманӗ. Пушартан сыхланассине нихҫан та манмала мар. Кашни колхозрах пушара хирӗҫ кӗрешекен дружинӑсем пулмала.

Анчах та Шупашкар районӗнче пушарпа кӗрешес ӗҫ чӑтма ҫук йапӑх тӑрать. Нумай колхозсенче насуссем халӗ те урапасем ҫинчех лараҫҫӗ. Тренкасси, Хыркасси йалӗсенче пушар пичкисене ӑҫта килчӗ унта хуҫалӑх ӗҫӗсенче усӑ кураҫҫӗ, витрӗсене вырӑнта тӑратмаҫҫӗ, пушар инвентарӗсемпе уйрӑм ответлӑ ҫын уйӑрман. Ку йалсенче амбарсен хуралӗпе йал хуралӗсене куҫ пуҫ витӗр мар вата ҫынсене уйӑрнӑ. Чӑкӑр йалсоветне кӗрекен Ахтанай йалӗнче пушар сарайӗ йӑтӑнса аннӑ. Кочаково йалсоветӗнче пушар ӗҫӗпе уйрӑм ответлӑ ҫын уйӑрманнипе пушара хирӗҫ кӗрешмели хатӗрсене салатса пӗтернӗ.

И. Николайев.

Мӗн вӑл раштав

„Христос ҫуралнӑ", теҫҫӗ пупсем. Йурать, ҫуралнӑ пултӑр. Ӑҫта тата хӑҫан ҫуралнӑ? Чӑнахах пулнӑ-и вӑл? Христос ҫуралса пурӑнни тата вилсе чӗрӗлни ҫинчен йевангелире ҫырнӑ. Анчах унта хайхи ыйтусене хирӗҫ мӗн чухлӗ те пулин пӗтлӗ ответ тупма ҫук. Йевангелире чӑнни нимӗн те ҫук, суйа халапсемпе хирӗҫӳсем йӗркеренех. Епӗр кунта хӑшпӗрисем ҫинче ҫеҫ чарӑнса тӑрасшӑн.

„Христос ҫурални" ҫинчен икӗ йевангелис, Матфейпа Лука кӑна ҫыраҫҫӗ. Ыттисем вара—Маркпа Иоанн—нимӗн те шарламаҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен йумахне тӳрех ҫитӗннӗ христосран пуҫлаҫҫӗ. Матфейпа Лукан та вӗҫӗпе вӗҫӗ сыхӑнмасть, христос ҫурални икӗ тӗрлӗ тухать.

„Христос ҫурални ҫапла пулнӑ:—тет Матфей,—унӑн амӑшне Марийене Иосиф вальли ҫураҫсан, вӗсем пӗрле пурӑнма пуҫличченех, Марийе светой сывлӑш хӑвачӗпе йӑвӑр ҫын пулнӑ. Иосиф ӗнтӗ, унӑн упӑшки, ҫылӑха кӗмен ҫын пулнӑ, арӑмне халӑх умӗнче намӑса кӑларас мар, тесе хӑй патӗнчен вӑрттӑн ӑсатасшӑн пулнӑ. Анчах ҫапла шухӑшланӑ хыҫҫӑн, тӗлӗкре ун патне антел пынӑ та каланӑ: Давид ывӑлӗ Иосиф! Марийене, хӑвӑн арӑмна, йышӑнма хӑраса ан тӑр; мӗншӗн тесен вӑл светой сывлӑшран йӑвӑр ҫын пулнӑ; ывӑл ҫуратса парӗ, есӗ ӑна Иисус йатлӑ хурӑн" (гл. 1, ст. 18—21).

Лука йевангелисӑн йалтах урӑхла. Вӑл каланӑ тӑрӑх антел Марийе патне пырса куҫа-куҫӑн курӑнӑсса каланӑ: „Ей тивлетлӗ хӗр, савӑн; саппала турӑ; есӗ пур хӗрарӑмсенчен те мухтавлӑ" (гл. 1, ст. 28). Марийе ҫав сӑмахсене илтсен вӑтанса кайнӑ. Вӑтаннине кура антел каланӑ: „ан хӑра, Марийе, есӗ турӑран тивлет тупрӑн, есӗ акӑ йӑвӑр ҫын пулӑн, ывӑл ача ҫуратса парӑн" (гл. 1, ст. 30—31).

Ҫапла ӗнтӗ, икӗ тӗрлӗ сӳпӗлтетеҫҫӗ. Пӗрин антелӗ тӗлӗкре Иосиф патне пырать, теприн—Марийе патне пырса куҫа-куҫӑн курӑнӑсса каласать. Ку ҫеҫ те мар. Вӗсен халапӗсем малала та ҫавӑн пекех хытӑ хирӗҫсе пыраҫҫӗ.

Матфей ҫырнине ӗненес пулсан, христос Ирод патша вӑхӑтӗнче Вифлейемра ҫуралнӑ. Ӑҫта ҫуралнипе ҫӑлтӑрҫӑсем ҫӑлтӑр тӑрӑх шыраса тупнӑ. Ирод патша тин ҫеҫ ҫуралнӑ ачана вӗлересшӗн пулнӑ. Иосифпа Марийе Йегипета тухса тарнӑ. Ҫапла вара хӑйсен ачине хайар патшаран ҫӑлса хӑварнӑ имӗш.

Лука кунта та тепӗр майлӑ кастарать. Август йатлӑ монарх пӗтӗм ҫӗршывӗне перепис туса тухма хушнӑ, тет вӑл. Иосиф хӑйӗн арӑмӗпе Назаретран Вифлейем хулине ҫырӑнма кайнӑ. Марийе ҫав вӑхӑтра йӑвӑр ҫын пулнӑ. Ҫырӑнма кайнӑ ҫӗрте вӑл ывӑл ача туса панӑ. Ача ҫуратнӑ хыҫҫӑн унта ерне нисҫта та тухса курман.

Кунта Ирод патша ҫинчен сӑмах та ҫук. Ирод ҫинчен Лука чылай кайарахпа ҫеҫ асӑнса илет.

Ҫуралнӑ хыҫҫӑн мӗн пулни ҫинчен пӗр йевангелис та ҫырмасть. Ҫуралнинчен тӳрех шыва кӗни ҫине куҫаҫҫӗ. Шыва кӗнӗ чухне Христос вӑтӑр ҫулта пулнӑ, тет Лука. (гл. 3, ст. 23). Вӑтӑр ҫулччен мӗн туса пурӑннӑ, — вӑл паллӑ мар. Марк йевангелис каланӑ тӑрӑх, христоса Иоанн пӗр сӑмахсӑрах шыва кӗртсе кӑларнӑ. Иоанн Иисуса чарса каланӑ, тет Матфей: „Сапӑн мана шыва кӗртмеле, есӗ ху ман патӑма килтӗн-и?" (гл. 3, ст. 14). Лука татах тепӗр тӗрлӗ калать: Иоанн шыва кӗртнӗ чухне христоса палласа та йулайман, тет.

Христос шыва кӗнӗ, тейӗпӗр. Малала мӗн? Иисуса светой сывлӑш пушӑ хире илсе кайнӑ, тет Марк. Ҫук, светой сывлӑш мар,—тет Матфей,—шуйтан илсе кайнӑ ӑна. Иоанн текенни пӗрнипе те килӗшмест: шыва кӗнӗ хыҫҫӑн виҫӗ кунран,—тет вӑл,—Иисуспа амӑшӗ туйра пулнӑ.

Йевангелиссем мӗн пуҫласа вӗсне ҫитиччех пӗр-пӗрипе хирӗҫсе тулхӑраҫҫӗ. Ҫав хирӗҫӳсене пурне те пӗр статйара илсе кӑтартма май ҫук пирки кунта хӑшне-пӗрне ҫеҫ илсе кӑтартрӑмӑр. Анчах йевангели суйине витӗр курма вӗсем те ҫителӗклӗ.

Христос ҫинчен калани пӗтӗмпех йумах, фантази пулса тӑрать. Пурнӑҫра ун пек факт пулман. Ӑна ҫынсем хӑйсем шутласа кӑларнӑ. Експлоататорла классем христос тӗнне етемлӗхе тискӗр пусмӑрта усрама пулӑшакан орудин туса хунӑ.

Истори кӗнекисенче христос ҫинчен нисҫта та пӗр сӑмах та ҫук. Сӑмахран, ҫулталӑксене христианла шутлама пуҫланӑ хыҫҫӑн, 74 ҫулта Флавий хушаматлӑ историк „Иудейсен вӑрҫи ҫинчен" истори ҫырнӑ. Вӑл хӑй иудей, 37 ҫулта Иерусалимра ҫуралнӑ. Христос ҫуралнӑ текен вӑхӑта илсе, ҫав таппӑрти событисем ҫинчен вӑл питӗ тӗплӗн ҫырнӑ. Анчах христос ҫинчен пӗрре те асӑнман. Асӑнма та пултарайман, мӗншӗн тесен нимӗнле христос та пулман.

Ӗненекенсем калаҫҫӗ, мӗн авалранпах христос ҫуралнӑранпах, ҫапла пулнӑ, теҫҫӗ. Чӑвашсем хушшинче те ӗненекенсем, христос ҫуралнӑранпах христос тӗнне пурӑнатпӑр, тесе шутлаҫҫӗ. Ку тӗрӗс мар. Пуҫпулса тӑракан классем VI-мӗш ӗмӗртен ҫеҫ ҫулталӑксене христианла шутлама пуҫланӑ. Вӑл та чиркӳ хучӗсенче ҫеҫ тӗл пулкаланӑ. Ҫулталӑксене тӑтӑшах ҫӗнеле шутласси 1431 ҫулта тин пуҫланнӑ. Мускав Рӳҫӗнче ҫулталӑксене „тӗпӗне пултарнӑ", вӑхӑтран шутласа пынӑ. Петр I патша 1700 ҫулта киввине прахӑҫ туса, ҫулталӑксене ҫӗнӗле шутламала тунӑ. Христос тӗнӗ Российӑра X-мӗш ӗмӗрте тин сарӑлма пуҫланӑ. Талкӑшӗпе сарса ҫитерме темиҫе ҫӗр ҫул кирлӗ пулнӑ. Чӑвашсене XVII-мӗш ӗмӗрӗн 70—80-мӗш ҫулӗсенче христос тӗнне вӑйпа йышӑнтарма пуҫланӑ.

Сӑмах майӗпе ҫакна калаҫа хӑвармала. Чӑваш республикӗнчи хӑшпӗр районсенче раштава сурхури, теҫҫӗ. Сурӑх-ури текенни ӗлӗк ҫамрӑксен хӗллехи праҫникӗ пулнӑ. Ҫав праҫникре вӗсем тӗрлӗ тӗшмӗшлӗхсемпе аппаланнӑ. Картара, тӗттӗм ҫӗрте, шур сурӑх тытсан, унӑн арӑмӗ сарӑ пуласине пӗлтерет, хура сурӑх тытсан, арӑмӗ хура пуласине пӗлтерет, тесе шутланӑ т. ыт. те. Ҫав тӗшмӗшлӗхӗн йулашкисем—хӑшпӗр ҫӗрте, халӗ те пурнаҫҫӗ-ха.

Христос ҫинчен калакан тӗрлӗ йумахсемне, тӗнне, експлоататорсем ӗҫсыннисене нумай ӗмӗрсем хушши улталаса, хӑратса пурӑннӑ, тӗттӗмре пӑчӑхтарса усранӑ, тӳсме ҫук тискеррӗн експлоатацилене, тӗн йачӗпе халӑхсен йунне йӑхтарса вӑрҫа йарӑнӑ. Капиталисӑмлӑ тӗнчере халӗ те ҫавах.

Тӗн ҫинчен тата унӑн тӗп сӑлтавӗсем ҫинчен Ленин ҫапла ҫырнӑ:

„Тӗн пур ҫӗрте те, ӗмӗр ыттисемшӗн ӗҫленипе, чухӑнлӑхпа тата пӗччен-лӗхпе пусарӑнса лартнӑ халӑх массисем ҫинче тӑракан ӑсхакӑл пусмӑрӗсенчен пӗри пулать. Тахҫан-авалхи ҫынӑн ҫутҫанталӑкпа кӗрешес ҫӗрти вӑйсӑрлӑхӗ турӑсене, усалсене, тӗлӗнмелӗ хӑватсене т. ыт. савнашкаллисене ӗненессине кӑларса тӑнӑ пекех, пусмӑрти классен експлоататорсене хирӗҫ кӗрешес ҫӗрти вӑйсӑрлӑхӗ леш тӗнчери лайӑх пурнӑҫа ӗненессине иртеймӗ кӑларса тӑрать. Ӗмӗрӗпех ӗҫлесе нуша курса пурнакансене тӗн пӗлӗт ҫинче ырлӑх пуласине йӑпатса, ҫӗр ҫинче йӑваш та чӑтӑмлӑ пулма вӗрентет. Ҫын вӑйӗпе пурӑнакансене вара тӗн ҫӗр ҫинче ырӑ йатлӑ пулса пурӑнма вӗрентет, ҫапла вара вӗсене пӗтӗм експлоататорлӑ пурнӑҫне ҫӑмӑллӑнах тӳрре кӑлармалли май сӗнет тата пӗлӗт ҫинчи ырлӑха лекмели билетсене килӗшӳлӗ хакпа сутать. Тӗн халӑха анра-сухрана йамали опиум пулать. Тӗн—ӑҫран кӑларакан наркӑмӑш йышши йапала, капитал чурисем хӑйсен етем сӑнне, мӗн чухлӗ те пулин етеме тивӗҫ пурнӑҫ тӑвас требованийӗсене ҫавӑн ӑшне путараҫҫӗ"*).

Совет Союзӗнче тӗнӗн тӗп тымарӗсен йулашкисене, вӗсен тӗпренчӗкӗсене кӑларса тӑракан сӑлкуҫа пӗтернӗ. Ленин—Сталин партийӗ йертсе пынипе совет ҫӗршывӗнче социалисӑмлӑ обшчествӑ туса хунӑ.

—ССР Союзӗнче експлоататорлӑ классем тата експлоатаци ҫук.

—ССР Союзӗнче пӗр наци тепӗр нацийе пусмӑрласа пурӑнни ҫук.

ССР Союзӗнче хӗрарӑмсем пусмӑр тӳссе правасӑр пурӑнни ҫук.

ССР Союзӗнче безработицӑпа чухӑнлӑх ҫук.

ССР Союзӗнче социаллӑ пӗччен-лӗх ҫук. Совет хресченӗсем колхозсенче пӗрлешсе тӑраҫҫӗ. Вӗсем пӗрле, чи малта тӑракан техникӑпа, ӑслӑлӑх вӗрентнӗ пек ӗҫлеҫҫӗ.

Анчах турра ӗненекенсем нумай-ха. Кунта тӗлӗнмели нимӗн те ҫук. Ҫынсене вӗт кӑкӑр сӗчӗпе пӗрле, ӗмӗртен ӗмӗре, сыпӑкран сыпӑка тӗне хӑнӑхтарса пынӑ. Ҫынсен пуҫне тахҫан-авалтанпах тӗн наркӑмӑшӗ чыхнӑ. Тӗн пирӗн ҫӗршывра експлоатацилӗ кивӗ тӗнчен йулашки пулса тӑрать. Паллах, ҫавна ҫынсен ӑстӑнӗнчен тасатса кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлес те ӗҫлес пулать.

Пирӗн ҫӗршывра експлоататорлӑ классем ҫук: вӗсене пӗтернӗ. Анчах ҫав классен йулашкисем, вӗсен тӗпренчӗкӗсем пурнаҫҫӗ. Совет союзӗнче пупсем, дйакӑнсем, чиркӳ старостисем, муллӑсем, баптистсем т. ыт. консервативлӑ етемсем те сахал мар. Вӗсем халӑх тӑшманӗсемпе пӗрле сахал мар сӑтӑр тунӑ, тӑваҫҫӗ те. Пупсем тата сектантсен руководителӗсем чылай чухне тӳррӗмех халӑх тӑшманӗсемпе — троцкисла-бухаринла-националисла шпионсемпе, диверсантсемпе, сынвӗлӗрӗсемпе сыхӑнса ӗҫлеҫҫӗ. Контрреволюцилӗ ушкӑнсен пуҫӗнче „турӑ служителӗсем" тӑнӗ сайра-хутра мар пулнӑ.

Троцкистсем, бухаринцӑсем тата буржуалӑ националистсем, ҫавӑн пекех чиркӳ организацийӗсем те,—пурте вӗсем капиталистсене тата фашистсене служит тӑваҫҫӗ.

Тӗне хирӗҫ пропагандӑпа вӑйлатасси пысӑк задачӑсенчен пӗри пулса тӑрать. Ҫав задача ӑнӑҫулӑ пурнӑҫа кӗртес тесен, „тӗне хирӗҫле ӗҫ—иртсе кайнӑ тапхӑр" текен ҫӗрӗк те сиенлӗ теорийе ҫӗмӗрсе тӑкмала. Вӑл пирӗн ҫынсене сывратса йаракан, клас тӑшманӗсене вӑй илме пулӑшакан теори пулса тӑрать.

ПСК(б)П Тӗпкомӗн феврал-мартри Пленумӗнче тунӑ докладра Сталин йулташ ҫапла каланӑ:

„Епӗр кашни малала утмассеренех клас кӗрешӗвӗ пирте имӗш ытлараx та ытларах сӳнсе пымала, пирӗн ӗҫсем ӑнса пынӑ май клас тӑшманӗ имӗш ытларах та ытларах алла иленсе пырать текен ҫӗрӗк теорийе ҫӗмӗрсе тӑкса айаккала ывӑтса йамала.

Ку—ҫӗрӗк теори ҫеҫ те мар, вӑл хӑрушӑ теори, мӗншӗн тесен вӑл пирӗн ҫынсене ӑйха йарать, вӗсене капкӑна лектерет, совет влаҫне хирӗҫ кӗрешме вара клас тӑшманне вӑй илме май парать.

Пӑлтах урӑхла, епӗр малала мӗн чухлӗ ытларах кайӑпӑр, пирӗн ӑнӑҫусем мӗн чухлӗ ытларах пулӗҫ, ҫӗмӗрсе тӑкнӑ експлоататорлӑ классен йулашкийӗсем ҫавӑн чухлӗ ытларах усалланса пырӗҫ, вӗсем ҫавӑн чухлӗ хӑвӑртрах ҫивӗчрех формӑсемпе кӗрешме пуҫӑнӗҫ, совет государствине хирӗҫ вӗсем ҫавӑн чухлӗ ытларах пакӑҫ тӑвӗҫ, вӗсем ҫавӑн чухлӗ ытларах кӗрешӗвӗн чи хайар хатӗрӗсене, пӗтме пуҫнисен йулашки хатӗрӗсем пулса тӑракансене йарса тытӗҫ.

ССР Союзӗнче ҫӗмӗрсе тӑкнӑ классен йулашкийӗсем пӗччен мар пине асра тытас пулать. Вӗсем ССР Союзӗн тулашӗнчи пирӗн тӑшмансенчен тӳрех пулӑшу илсе тӑраҫҫӗ. Клас кӗрешӗвӗ ССР Союзӗнче чиккисем ӑшӗнче кӑна пулса пырать тесе шухӑшлани тӗрӗс мар пулнӑ пулӗччӗ. Клас кӗрешӗвӗн пӗр вӗҫӗ ССР Союзӗнче пулса пырать пулсан, унӑн тепӗр вӗҫӗ пирӗн тавра тӑракан буржуалӑ государствӑсен ҫӗрӗсене тӑсӑлса кӗрет. Ҫӗмӗрсе тӑкнӑ классен йулашкийӗсем ҫавна пӗлмесӗр тӑма пултараймаҫҫӗ. Шӑпах ҫавӑнпа, ҫавӑн ҫинчен пӗлсе тӑнӑ пирки вӗсем малашне те пире хирӗҫ пуҫӑрӑнса хайаррӑн кӗрешсе пырӗҫ".

Ҫапла вӗрентет пире истори. Ҫапла вӗрентет пире ленинисӑм. Ҫавна пурне те асра тытса, йаланах хатӗр тӑмала.

*) Ленин—Социализм и религия, т. VIII стр. 419.

Китайри вăрçă

Тĕп фронтра чи вăйлă çапăçусем малтанхи пекех Ханчжоу районĕнче (Чжецзйан провинцин тĕп хули) пыраççĕ. Декабĕрĕн 19-мĕшĕнче Ханчжоуран çурçĕререх пулса иртнĕ çапăçура йапонцăсен 250 салтак ытла вилнĕ. Йапони çарĕсен тылĕнчи сăртсенче китайцăсем партизанла пысăк отрйад тунă. Вăл отрйад йапонцăсем Сецйао станци сывăхĕнче халĕ çеç йĕркеленĕ чукунçула çĕмĕрсе тăкнă.

Йапони çарĕсем, хăйсен Çурçĕр Китайра тăракан çарĕсемпе пĕрлешме, Нанкинран çурçĕреле тапăнма пуçланă. Тĕп колоннă Таңцзин — Пукоу чукунçулĕ тăрăх, Суйчжоу чукунçул узĕлне тапăнса пырать. Йанцзы йуханшывăн çурçĕр йенче, Чжеңцзйан хули тĕлне, вунă пин ытла Йапони салтакĕ тăратнă.

Декабĕрĕн 20-мĕшĕнче Йапонин 19 самођочĕ Вăтаçĕр Китайри чи пысăк хуласенчен пĕрин çине — Хаңкоу хули çине бомбăсем пăрахма хăтланнă. Хаңкоуран 120 километртра Китай самођочĕсем хирĕç тухнипе Йапони ескадрилйи кайала çаврăннă.

Çурçĕр Китайри фронтсенче лару-тăру нимĕн улшăнмасăрах тăрать.

Англи пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, малтан Шанхай фронтне йышăннă Йапони çарĕсене халĕ кăнтăра йанă. Йапонин пысăк флочĕ кăнтăр Китай хĕрĕнче Кантон районĕнче вырнаçнă.

Кăнтăр Китайра Йапони çарĕсем тапăнассине кĕтсе 500 пине йахăн Китай çарĕ пухнă. Китай влаçĕсем — йапонцăсен Кантон çине ăнаçлăн тапăнас пулсан çапăçура çĕр пин çынран кайа мар памала, тесе шутлаççĕ.

(ТАСС).

Китай правителстви йапонин Çурçĕр Китайри пукане правителстви çинчен тунă зайавлени

ХАҢКОУ, декабĕрĕн 21-мĕш. Китайăн нацилĕ правителстви зайавлени пичетлесе кăларнă. Вăл зайавленире çапла калана:

„Китай çĕрĕн пысăк пайне тытса илсе тата шутсăр нумай китай гражданĕсене вĕлерсе, Йапони халĕ хăйĕн çарĕсемпе йышăнса илнĕ Бейпинра контрођ тума, унта саккунсăр режим тата „Китай республикĕн вăхăтлăх правителстви“ тесе калакан суйа правителствă тума пуçларĕ. Ку вăл Йапони Манчжурире, Жехере тата хĕвелтухăç Хебейре тунисене тепĕр хут тунийех пулать. Йапонин Китайри хĕçпăшаллă агреççипе пулнă çав мĕн пур „правителствăсем“ ахаљ пуканесем çеç пулаççĕ“.

Китай республикĕн нацилĕ правителстви, çавăн пек саккунсăр организацисен пĕтĕм ĕçĕсене Китайра та, тата Китай тулашĕнче те нимĕне те пĕлтермен ĕçсем çине пăхнă пек пăхмала, тесе пĕлтерет.

(ТАСС).

Октăбĕрти Социалисăмла Аслă револђуци çирĕм çул тултарнă йатпа Барселонăра пулса иртнĕ лару

БАРСЕЛОНА, декабĕрĕн 21-мĕш. Декабĕрĕн 19-мĕшĕнче ССР Сойузĕнчи Октăбĕрти Социалисăмла Аслă револђуци çирĕм çул тултарнине чысласа иргерне. Зал туллийех пухăннă халăх ССР Сойузĕн Испанири полпредствă представителĕсене тата Совет Сойузĕнчен таврăннă Испани делегацине саламласа оваци тунă.

Мадридри профсойузсен руководителĕсенчен пĕри, делегацире пулнă Ангизно, совет халăхĕ республикăлă Испание пĕр шухăшлă пулни çинчен каласа парса, халăх фронтне тата Испани ĕççыннисен пĕрлĕхне çирĕплетме чĕннĕ. Кортессен (парламент) депутачĕ—Астури горњакĕсен представителĕ—Томас Беларминo ССР Сойузĕ çирĕм çул хушшинче калама çук пысăк çитĕнӳсем тума пултарнă, тесе калана. Вăл ССР Сойузĕн халăхĕсем Испани ачисемшĕн тĕлĕнмеле тăрăшни çинчен каласа панă. Каталони правителствин советникĕ Видиелйа тĕрлĕ партисен депутачĕсем ССР Сойузне кайса курсан пурте пĕр шухăшлăн хавасланнине паллă тунă. ССР Сойузĕн халăхĕсем,— тенĕ вăл,—хăйсен руководителĕсем тавра таччăн пĕтĕçнĕ тата хăйсен правителствине пĕр çын пек хута кĕреççĕ.

(ТАСС).

Хроника

— Кăçалхи декабĕрĕн 31-мĕшĕнче 1928 çулта тунă Пулă тытмали конвенци срукĕ тухнă майпа тата çĕнĕ конвенци тăвасси çинчен 1935 çултах пуçлана калаçусем нимĕнле килĕшӳ патне те илсе пыман пирки, Йапони правителстви Совет правителствинчен 1928 çулта тунă Пулă тытмали конвенцин срукне 1938 çула тăсма ыйтнă.

Совет правителстви кун пирки хăйĕн килĕшӳне панă.

(ТАСС).

„Çурçĕр полђус“ станцийĕ—Гренланди çыранĕсем патĕнче

Куçса çӳрекен пăр çинчи „Çурçĕр полђус“ станцийĕ декабĕрĕн 21-мĕшĕнче кăнтăрла 1 сехетре çурçĕр широтин 81 градусĕпе 44 минутинче тата хĕвеланăç долготин 4 градусĕпе 37 минутинче пулнă.

Пăр Гренланди çыранĕсем патĕнче ишсе çӳрет.

Станци районĕнче—талкишпех пĕлĕтлĕ, 5 баллă çил вĕрет, температурă—24 градус сивĕ.

(ТАСС).

Çĕрпӳ районĕнче ĕççыннисен жалăбисем çине бӳрократла пăхаççĕ

Ĕçре палăракан çитменлĕхсемпе йĕркесĕрлĕхсем çинчен çырнă ĕçйалкорсен хăшпĕр çырувĕсемпе жалăбисене редакци тĕрĕслеме, жалăбăра кăтартнă çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерме районсенчи тĕрлĕрен организацисене йарать.

Районсенчи организацисен руководителĕсен вăл жалăбăсене пурне те тĕрĕс шута илсе, ĕç мĕнле пынине тата жалăбăсем тăрăх йышăннă решенисем пурнăçа кĕнине тĕрĕслесе тăмала, ĕççыннисен жалăбисене çухатса айăпа кĕнĕ работниксене çирĕп ответ тыттармала.

Ĕççыннисен жалăбисене вăхăтра пăхса тухса татса парас ĕç пирки ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваштĕпĕçтăвкомĕн президиумĕ йенчен районсенчи организацисене чылай кăтартусем пулнă. Анчах Çĕрпӳ районĕнчи хăшпĕр организацисем ĕççыннисен жалăбисемпе ĕçлес йенĕпе халĕ те тивĕçлĕ выводсем тăвайман-ха. Жалăбăсене вăхăтра тĕрĕслесе, татса парас ĕç уйрăмăнах прокуратурăра, çĕрĕç, сутĕç пайĕсенче шутсăр йапăх тăрать. Акă, августăн 1-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ“ хаçатра „Пучах“ колхозра йалхуçалăх ертелĕн уставне пăсса ĕçлени, колхозри пуçлăхсем самокритикăна хĕсни, 50 пин тенкĕлĕх клевр вăррине çĕртни, çĕрулмине шăнтса йурăхсăра кăларни тата ытти ирсĕр ĕçсем çинчен те çырнă заметкăна редакци тĕрĕслесе айăплисене ответ тыттарма прокуратурăна йанăччĕ. Заметкă йанăранпа 5 уйăх çитет ĕнтĕ, çапах та прокурор вăл заметкă пирки нимĕн те туман, колхозри сăтăрçăсене ответ тыттарасси çинчен шутламан. Кун пирки редакци йенчен прокурор патне темиçе хут та асăрхаттару пулнă, анчах хытă чунлă прокуроршăн вăл асăрхаттарусем нимĕн те мар иккен. „Колхоз пурлăхне вырăнсăр салатаççĕ“, „Колхозниксен укçине тытса усрать“, „Тискер вăрçакан“ йатлă заметкăсем прокурор папки ăшĕнче 7—8 уйăх хушши выртаççĕ.

„Учителсен ирсĕрлĕхĕсем“ тесе çырнă заметкăна сутĕç пайĕ йанварĕн 19-мĕшĕнчен вара ответ памасть.

Жалăбă кĕнеки çине „отвечено 2 мая с/г за №39/6“ тесе паллă тунă. Заметкăна хăçан тата кам тĕрĕсленĕ, кама ответ панă? Вăл паллă мар сутĕç пайĕнче ĕçлекен работниксене те.

Çĕрĕç пайĕнче вара жалăбăсемпе вуçех те ĕçлемеççĕ. Жалăбăсене тĕрĕслемесĕр çулталăкшар выртараççĕ. Йанварте пырса кĕнĕ 4 заметкăна, мартри—3, майри пĕр заметкăна çĕрĕç пайĕнче çухатнă. Акă тата çĕрĕç пайĕнче ĕçлекен бӳрократсем ĕçйалкорсен заметкине тĕрĕслемесĕрех панă ответ: „Присланная Вами газетная заметка „Ĕçсем йапăх пынă çĕрте“ полностью подтвердилась“. Заметкă тĕрĕс пулсан, çĕрĕç пайĕ заметкăра çырнă фактсене йĕтерессипе мĕн тунă-ши? Пачах паллă мар.

Йалкорсен çырувĕсемпе жалăбисем çине çавăн пек ответ пани—йалкорсен çырувĕсемпе жалăбисенчен мĕнле те пулин хăвăртрах уйăрăласчĕ, часрах алăран кайтăрччĕ тени пулать, ĕçйалкорсен çырувĕсемпе жалăбисене хакламанни курăнать. Çапла вара Çĕрпӳ районĕнчи организацисем ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн бӳровĕпе Чăваштĕпĕçтăвком президиумĕ ĕççыннисен жалăбисене пăхса тухасси çинчен йышăннă решенисемпе кăтартусене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешни çук.

Мих. Йаковлев.

Кукеçри столовăй çинчен

Кукеç йалповĕн столовăйĕ тултан та, шалтан та пăхма аван. Шалти стенасем шурă, тĕрлĕрен картинсем пур, каçхине електричествă та сунать.

Анчах апат пахалăхĕ питĕ начар. Хăшпĕр чухне, апат-çимĕçрен мунчаласем, çӳç пĕрчисем т. ыт. те тухаççĕ, йе тата апат-çимĕçе часчасах тăварсăр пĕçереççĕ.

Столовăйра апатланакансене 3—4 кун тăрса, типсе тĕпренекен çăкăр çитереççĕ. „Сирĕн мĕншĕн çăкăр йаланах типĕ“,—тесен: „Çавăншăн столовăй, столовăйĕнче тип çăкăр та çемçелет“,—тет буфетчик Михайлов.

Столовăйĕнче ĕçлекенсем санитарипе гигийенăна пăхăнмаççĕ. Ĕç вăхăтĕнче тăхăнмали халатсем таса мар. Буфетчик Михайлов çийĕнчи халата та икĕ-виçĕ уйăх ытла çуман, çума та шутламаççĕ. Официанкăсем çинчи халатсем те çавăн пекех таса мар, хура.

Столовăй йĕркелĕ ĕçлемест. Тепĕр чухне ирхине 8 сехетре уçас вырăнне 9—10 сехетсенче уçать. Вара районти работниксем, столовăйĕнче апат çийекеннисем, ирех апат çимесĕрех ĕçсене кайаççĕ. Каçхине те 5—7 сехетрех хупать.

Столовăй заведуйушчийĕ Михайлов. Михайлов йулташа çак çитменлĕхсем çинчен асăрхаттарман мар, асăрхаттарнă. Анчах вăл, çитменлĕхсене пĕтерессишĕн тăрăшмасть.

Столовăйра йĕркелĕх кирлĕ. Апла пулсан Кукеç йалповĕн столовăйри çитменлĕхсене пĕтересси çинчен шутламала. Ив. Чирков.

Спорт инвентарĕсем çук

Хĕлле пулнă май спорт инвентарĕсене ыйтакансем нумайланчĕç. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи çамрăксем хула магазинĕсем тăрăх йĕлтĕр, коњки, спорт костюмĕсем шыраççĕ. Магазинсемпе лавкасенчи продавецсем йаланах:

— Илсе килсе сутрăмăрçке, çак кунсенчех татах илсе килетпĕр ак,—тесе кăна ответлеççĕ. Хĕлле пулни чылай пулчĕ, çапах та сутуилӳ организацисем халăх ыйтакан таварсене вăхăтра илсе килессишĕн ĕçлемеççĕ. Василйев.

Тĕрĕсленĕ заметкăсем

* * „Пуçлăхсем самокритикăна хĕсеççĕ“ йатлă хаçатра тухман заметкăра Гаврилов йалкор Сĕнтĕрвăрри районĕнчи „Наука Ленина“ колхоз председателĕн заместителĕ Самаков колхоз укçи-тенкине салатни, Йамбасов колхознике нимĕн айăпсăрах хĕнени, ĕçкунĕсене вăхăтра çырса пыманни, колхозра самокртикăна хĕсни тата ыттисем çинчен те çырнăччĕ.

Ку заметкăна тĕрĕслеме редакци Сĕнтĕрвăрри райĕçтăвкомне йанăччĕ. „Заметкăна колхозниксен пухувĕнче сӳтсе-йавнă. Колхозниксен пухувĕ Самакова ĕçрен кăларнă. Йамбасов колхознике хĕненĕшĕн Самакова айăпласа уголовнăй ĕç пуçарма Сĕнтĕрвăрри районĕн прокурорне—Симонова йулташа хушнă“, тесе пĕлтерчĕ Сĕнтĕрвăрри райĕçтăвком председателĕ Кузьмин йулташ.

* * Иванов йалкорăн „Иванов бригадир йалхуçалăх ертелĕн уставне пăсса ĕçлет“ йатлă хаçатра тухман заметкине Тăвай районĕн прокурорĕ вырăна тухса тĕрĕсленĕ хыççăн, Нăрвашри „Красная Чувашия“ колхозри 5-мĕш бригадăн бригадирне—Иванова УК 109-мĕш статйипе айăпласа уголовнăй ĕç пуçарни çинчен çырса пĕлтерчĕ.

* * „Хулиган ĕçне тăваççĕ“ йатлă заметкăра Йефремов И. йулташ Ишлей районĕнчи Тивĕшри вăтам шкулта вĕрентекен Филиппов И. ĕççе ӳсĕррипе йал хушшинче хулиганла ĕçсем туса çӳрени, клас тăшманĕсемпе çыхăну тытни тата ыттисем çинчен те çырнăччĕ.

Заметкăра çырнă фактсене Ишлей райкомолĕнчен вырăна тухса тĕрĕсленĕ. Райкомол бӳровĕнче Филиппова комсомол йенĕпе хытă йатланă. Ĕçлеме урăх шкула куçарнă.

* * „Йĕркесĕрлĕхсем протоколсем çинчех йулаççĕ“ хаçатра тухман Григорйев А. йалкорăн заметкине Чăвашчăптапромсойузран вырăна тухса тĕрĕсленĕ хыççăн, президиумра сӳтсе-йавнă. Заметкăра çырнă фактсем тĕрĕс пулнă. Чăвашчăптапромсойуз президиумĕ шкул директорне — Скворцова шкулти йĕркесĕрлĕхсемпе çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерме хушнă. Президиум решенине йепле пурнăçласа пынине çитес уйăхрах президиум ларăвĕнче тепĕр хут сӳтсе-йавма палăртнă.

* * „Филиппов учителĕн ирсĕр ĕçĕсем“ тесе çырнă П. йалкорăн заметкине редакци тĕрĕслеме ПССЛКС Канаш райкомне йанăччĕ.

Заметкăра çырнă фактсене колхозри пуçламĕш комсомол организацинче сӳтсе-йавнă хыççăн, Филиппова комсомолтан кăларнă. Пуçламĕш комсомол организаци йышăннă решенине райкомол бӳровĕ çирĕплетнĕ.

* * Алексейев колхозникăн „Колхозри ирсĕрлĕхсем“ йатлă заметкине Çĕрпӳ районĕн прокурорĕ вырăна тухса тĕрĕсленĕ хыççăн, „Хĕрлĕ Павари“ колхоз завхозĕ Марков çинчен çырнă заметкăри фактсем тĕрĕс пулнă. Маркова УК 109-мĕш статйипе айăпласа уголовнăй ĕç пуçарнă.

СУД

Икĕ çуллăха хупмала турĕç

Шанарпуç йалĕнчи (Куславкка р.) Андрей Алексейев йаланах ӳсĕр çӳрет, час-часах хулиганла ĕçсем тăвать.

Суйлав умĕнхи кампани вăхăтĕнче, нойабĕрĕн 29-мĕшĕнче, Аслă Совета депутата суйламали кандидатсем çинчен агитацилекен плакатсене Алексейев çурса çӳренĕ.

Декабĕрĕн 11-мĕшĕнче районри халăх сучĕ йала пырса Алексейевăн ĕçне пăхса тухрĕ. Суд Андрей Алексейева икĕ çул хушши хупса усрамала тата икĕ çул саса прависĕр хăвармала турĕ. Д. М.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Чăваш Йалхуçалăх Институчĕ

институтa кĕме хатĕрлекен курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Курса 17 çултан пуçласа 34 çула çитнисене, вăтам шкул пĕтерни сене йе вăтам шкулăн 10-мĕш класĕнче, педучилищĕ, рабфак тата техникум йулашки курсĕнче вĕреннисене илеççĕ.

Зайавленисене директор йачĕпе йамала тата унпа пĕрле çак документсем пулмала: автобиографи, аттестат йе вĕренни çинчен справкă, çурални çинчен тата сывлăх çинчен справкă, виçĕ фотоӳкерчĕк.

Зайавленисене декабĕрĕн 30-мĕшчен йышăнаççĕ, 31-мĕшĕнче испытани пуçланать.

Курсантсене обшчежити тата стипенди параççĕ.

ДИРЕКЦИ.

5—1

СЫСНА ТИРĔ ЧĔН-САРАН ПРОМЫШЛЕННĂÇНЕ ВАЉЉИ ХАКЛĂ СЫРЙО

СЫСНА ТИРĔНЧЕН АТĂ-ПУШМАК, УТ ТАВРАШСЕМ Т. ЫТ. ЙАПАЛАСЕМ ТĂВАÇÇĔ САККУН СЫСНА ТИРНЕ ĔНТМЕ ЧАРАТ.

ПУСНĂ ТАТА ЙĔРЕКЕН ЧИРПЕ МАР ЧИРЛЕСЕ ВИЛНĔ СЫСНАСЕН ТАТА ÇУРИСЕН ТИРĔСЕНЕ СĔВĔР, ВĔСЕНЕ ГОСУДАРСТВĂ ХАТĔРЛЕВНЕ ПАРĂР.

ТИРЕ ПĂСĂЛАСРАН СЫХЛĂР!

СЫСНАНА ВЫЉĂХСЕНЕ ПУСМАЛИ ПЛОШЧАДКĂРА ПУСĂР—УНТА СЫСНАНА ТĔРĔС ПУСАÇÇĔ, ТИРНЕ ЛАЙĂХ СĔВЕÇÇĔ ТЕ ÇИЙĔНЧЕХ КОНСЕРВĂЛАÇÇĔ.

ПЫСĂК СУРТЛĂ ТИРШĔН ПЫСĂК ХАК ХУРСА ТӲЛЕÇÇĔ ТАТА ЛАЙĂХ ТАВАРСЕМ ПАРАÇÇĔ.

СЫСНАНА ЙАЛСЕНЧИ ПУСМАЛИ ПЛОШЧАДКĂРА ПУССА ПАНĂШĂН 1 ТЕНКĔ ИЛЕÇÇĔ.

Сирĕн йалта выљăхсене пусмали площадкă çук пулсан, сирĕн çывăхри йалти пусмали плошчадкăра, сире çирĕплетнĕ çĕрте пусмала.

Сыснана пусас умĕн ăшă шывпа çăвăр. Пусасса мăйран çĕçĕпе чиксе пусăр, анчах чĕререн чиксе пусма йурамасть. Çĕççе сысна мăйне урлă мар, тăрăх шăтăк тумала чикес пулать. Пуснă чух йунне таз ăшне йе тирĕк ăшне йухтарăр. Йун йухасси 8—10 минута пырать.

Тире сĕвнĕ чух сысна хырăмĕ тăрăх касса тухăр. Тире пĕтĕмпех пуçран пуçласа урисене те сĕвес пулать. Пĕççисене çĕçĕсĕр сĕвĕр. Тир сĕвмели станоксем лартăр. Станокпа сĕвнĕ чух малтан пуçне, хырăмне тата урисене сĕвсе хатĕрлĕр.

Сысна тирĕ сĕвнĕ хыççăн сивĕнсен тĕкне айалала, туса таса йавăç урайне сарса хурса таса типĕ тăварпа сапса хурăр. Тăвара тир йавăрăшĕн виççĕмĕш пайĕ чухлĕ илмеле. Пĕр тир çине теприне сарса хумала тата ыттисене те. Пĕр-икĕ кун иртсен тирсене уйрăм чĕркесе таса вырăнта усрамала.

Сысна тирĕсене йалпосен тата çавнашкалах сойуззаготкожăн выљăхсене пусакан плошчадкисем кăтартса панă хаксемпе илеççĕ.

СЫСНА ТИРĔСЕНЕ НИЙЕПЛЕ ТЕ ТИПĔТМЕ ЙЕ ШĂНТМА ЙУРАМАСТ—АПЛА ТУСАН ТИРСЕМ ПĂСĂЛАÇÇĔ.

Чăвашсойузăн хатĕрлев Управленийĕ.

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 979. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 2601. Тираж 13790.